Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ОКТАБЕР 12 ЙУНКУН 236(5049) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПКК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—47, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

1939 çулти майăн 1-мĕшĕ тĕлне хутпĕлменлĕхе пĕтермеле

Сталинла Конституци панă вĕренÿ прави пирĕн çĕршывра туллин пурнăçа кĕрсе пырать. Совет Союзĕнче пуранакан пĕтĕм халăхран виççĕмĕш пайĕ шкулсенче вĕренет. Кунсăр пуçне, хапрăк-саватсемпе колхозсенчи тĕрлĕрен техникăлă кружоксенче тата кĕске вăхатлăх организациленĕ курссенче вĕренекенсене шута илсен, пирĕн тăван çĕршыв пĕр калама çук пысăк шкул пек туха тăрать.

Пирĕн Чăваш республикинчи пуçламĕш, туллимар вăтам тата вăтам шкулсенче çеç 180 пин çынна йахан вĕренет.

Партипе правительство халăха çутта кăларас ĕçе питех те пысăк тимлĕхпе туса пыраççĕ. Совет государстви ку ĕçе тума укçа-тенкĕ расхутланă чухлĕ тĕнчере урах пĕр государства та расхутламасть.

Пирĕн ирĕклĕ совет халăхĕ культура, пĕлÿлĕх, аслăлах йеннеле тĕнче халиччен нихăçан курман вайпа туртăнать. Халĕ кашни совет ĕççынниех вĕренесшĕн.

Анчах халăха çутта кăларас ĕçе хăйсем çине илнĕ хăшпĕр органсем аслă халăх çак вайла туртăмне, коммунисăмсен партийĕпе совет правительстви ытла пек, халăх ытла пек, чылай чухне аначлан йĕркелесе пыраймаççĕ.

ССР Союзĕ Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе парти Тĕпкомĕ хутпĕлменлĕхе 1937 çулта пĕтересси çинчен йышăннă постановленипе пирĕн Чăваш республикинчи Çутĕç Халăх Комиссариачĕн тата вырăнсенчи çутĕç органĕсен пумалĕшĕн айапне пула, вăхатра пурнăçлаймарĕ.

1937 çул пĕтнĕ тĕле пирĕн республикăра хут пĕлменнисем 22.760 çын пулнă. Вĕсенчен 1938 çулта çак тарана çитичен 5.361 çынна вĕрентсе, хут сахал пĕлекенсен ушкăнне куçарнă. Ыттисем халĕ çаплипех хут вĕренеймесĕр йулса пыраççĕ. Хут сахал пĕлекенсене касăл 20.000 çынна вĕрентме палартнă пулнă, анчах вĕсенчен пĕтĕмпе те 7.436 çын çеç вĕрентсе кăларнă.

Уйрамах начар пырать ку ĕç Шанкартам, Хĕрлĕ Чутай, Турхан, Вăрнар районĕсенче. Шанкартам районĕнче хут пĕлмен 2.483 çынран касăл 412 çын, Хĕрлĕ Чутай районĕнче 1.786 çынран 276 çын, Турхан районĕнче 1.318 çынран 588 çын, Вăрнар районĕнче 1.123 çынран 165 çын вĕрентсе, хут сахал пĕлекенсен ушкăнне куçарнă.

Мĕнрен килет ĕнтĕ государствăн çак пысăк ĕçĕ пурнăçа кĕмесĕр тăлăха пыни? Чи малтан Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе унăн органĕсем начар ĕçленинчен. ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕнче хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçĕн ответлăхне пĕтĕмпех çитĕннисене вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлекен управлени çине тийенĕ. Анчах, тĕрĕссипе илсен, кунта ку управлени çук та темеле. 1932 çултан пуçласа касăлхи ийунь уйăхĕччен çак управлени пуçлăхĕнче Романăв йултăш тăнă. Вăл çитĕннисене вĕрентес йĕнпе, сводкăсем пухнисĕр пуçне, нимĕн те туман. Çакăншăн ăна ĕçрен кăларнă, анчах ун вырăнне никама та тупса лартман. Çутĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ Максимăв йултăш çитĕннисене вĕрентес йĕнĕпе ĕçлекен управленин ĕçĕсене „сыхласа усрама", виçĕ кунлăха, заочнăй вăтам шкул директорне Смирнов йултăша хушнă. Анчах Смирновăн управлени хучĕсене виçĕ кун мар, виçĕ уйăх та мар, пайанхи кунччен сыхласа лармала пулнă.

Çакна пула çитĕннисене вĕрентес ĕç, çитĕннисен хĕллехи вăхатра ĕçлесе пынă шкулĕсем пĕтĕмпех арканса кайрĕç.

Райĕçтăвкомсем хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе районри çутĕç пайĕсемпе йалсоветсем çине йăвантарнă. Хăйсем йенчен вĕсем ку тĕлĕшпе нимĕн те туман тесен те йăнăш пулмасть. Райĕçтăвкомсем, парти райкомĕсем йалсене, тĕрлĕ хатĕрлев планĕсене пурнăçа кĕртме, куллен çĕнĕрен-çĕнĕ çынсем параççĕ. Йала пынă çынсем пур йĕнĕпе те ĕçлеççĕ, анчах пĕр пысăк ĕçе — халăха çутта кăларас ĕçе манаççĕ.

Тÿрри каласан, парти райкомĕсем çак политикăлă ответлă ĕçе хăйсен кулленхи ĕçĕнчен айакра тăратса хăварнă. Парти Обкомĕн политпросвет пайĕ те çитĕннисене вĕрентес йĕнĕпе кирлĕ пек йертсе пымасть. Обкомăн политпросвет пайĕнчи хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе мĕнле пыни çинчен Çутĕç Халăх Комиссариачĕн сводкисем тăрăх кăна пĕлеççĕ, анчах вăл сводкăсем нумай чухне шанчăксăр.

Хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçре халăх тăшманĕсем—троцкиссем, бухаринçсем, буржуалла-националиссем нумай сăтăрласа хăварчĕç. Çутĕç органĕсенче ларнă тăшмансем, ĕççынниссен тимлĕхне макатас шутпа, 1932 çултах Чăваш республикĕ хутпĕлменлĕхе талккишĕпех пĕтернĕ тесе кăшкăрчĕç, вĕсем çитĕннисене вĕрентес ĕçе аркатса йачĕç.

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе унăн вырăнти органĕсем тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерес ĕçе тивĕçлипе тытăнман. Малала кун пек вăрахăн ĕçленине тÿсме çук. Хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе панă сруксем иртсе кайрĕç ĕнтĕ. Çутĕç органĕсем хăйсен халăх умĕнчи пысăк парăмне сăмахпа мар, ĕçпе татмала. Партипе совет органĕсен, комсомол, профсойуз, пичет тата ытти общĕствăлă организацисен çутĕç органĕсене конкретлă ĕçре пулăшса пымала.

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Тÿркин йултăш автономлă республикăсенчи Çутĕç Халăх Комиссариачĕсемпе облăçсенчи çутĕç пайĕсене 1938 çулти октаберĕн 1-мĕшĕ тĕлне хутпĕлменнисене, 14 çултан пуçласа 50 çула çитиччен, пурне те вĕрентме тытăнма хушнă. 1939 çулти майăн 1-мĕшĕ тĕлне вĕсене, хутпĕлменнисен шкулĕн программинче кăтартнă пĕлĕве парса, вĕрентсе кăлармала.

Анчах пирĕн Çутĕç Халăх Комиссариачĕ ку приказа пурнăçлама тытăнман-ха. Хутпĕлменнисемпе сахал пĕлекенсен шкулĕсем пĕр районра та, пĕр йалсоветĕнче те ĕçе пуçăнман.

Парти Чăваш Обкомĕн политпросвет пайĕн, ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн, парти райкомĕсемпе райĕçтавкомсен хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе халех хускатса йама тивĕçлĕ мерăсем йышăнмала, вĕсен ку ĕçе куллен йертсе пымала.

Çутĕç органĕсен хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе такам туса парасса кĕтсе лармала мар, вĕсен ăна хăйсен тумала. Вĕсен, партипе правительства постановленийĕсемпе усă курса, хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе йалти учительсене, предприйатисемпе колхозсенчи пĕтĕм культурăлă вăйа мобилизацилемеле.

Пирĕн культармейĕцсен çарĕ пысăк. Кашни йалсовечĕ çумĕнче хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлекен çекцисем пур, çав çекцисене пĕтĕмпе 7.000 культармеец ĕçлеме йахан тăрать. Çак пысăк çара ĕçе кирлĕ пек мобилизацилесен, вăл чаннипех те пысăк ĕç тума пултарать.

Кашни йалсоветĕнче çитĕннисен шкулĕсем уçмала, унта ахаль шкултти пекех тивĕçлĕ йĕрке тумала, кашни вĕренекене учебниксем, хут-каранташ памала, хутпĕлменнисен шкулĕнче вĕренсе тухакансене малала вĕрентсе пымала.

Хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе, социалисăм строительствинчи ытти политикăлă пысăк ĕçсем пекех, тĕплĕн туса пымала. 1939 çулти майăн 1-мĕшĕ—хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçĕн йулашки срукĕ пулса тăтăр.

Октаберĕ уйавĕ умĕнхи ăмăрту

Кашни кунах иккшер нормă

Шупашкарти 1-мĕш № типографинчи рабочисем Октабер уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă май ĕçре пример кăтартса ĕçлеççĕ: наборнăй цехри стахановецсем: Акишин йултăш кашни кунах наборлас нормăна 258 процент, Софронăв—250 процент, Миначăв—238 процент, Осипăв — 213 процент тултарса пыраççĕ. 120—170 процентшар тултарса ĕçлекен наборщиксем цехра сахал мар.

Социалисăмлă ăмăрту ытти цехсенче те саралсах пырать. Ака, переплетнăй цехри Ретивова йултăш плана 250 процент, Филиппăва йултăш 224 процент, Антонăва—200 процент, Выгăйăрăв 127,7 процент, цинкографинче ĕçлекен комсомолец Трусков йултăш—150—170 процентшар тултарса ĕçлеççĕ.

М. Григорьев.

Квартал планне 174,7 процент тултарнă

ИШЛЕЙ. Чураçкассинчи промысла ертелĕн членĕсем хушшинче политикăла-массăлă ĕçе лайăх йĕркеленĕ май стахановла йухăм саралсах пырать. Ертелре нумайĕшĕ нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ. Ака, Ильйа Зайцĕв йултăш III-мĕш квартăлта 550 чăпта çапса плана 180 процент тултарнă, Çергей Йефимăв йултăш та 500 чăпта çапнă.

Стахановла йухăм вайланса пыни çакăнтан та паллă: ертелĕн III-мĕш квартăлта 8050 чăпта çапса кăлармала пулнă пулсан, вăл 14070 чăпта çапса квартăл планне 174,7 процент тултарнă. Халĕ ертел членĕсем IV-мĕш квартăл планне срукчен тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Ив. Çеменăв.

Кашни рабочи ăмăртăва хутшăннă

ЙЕЛЧĔК. Крахмал саватĕнчи рабочисемпе инженерлă - техникăлă работниксем Октаберти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултаракан чаплă уйава социалисăмлă ăмăртăва татах та ытларах вăйлатса промфинплана ытлашшипех тултарнипе, ĕç тухăçлăхне хăпартнипе кĕтсе илме пулчĕç. Халь бригадăсемпе уйрăм рабочисем хушшинче ăмăрту саралсах пырать. Кашнийех илнĕ обйазательствăна срукчен тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Слесăр Йевдокимăв, çĕр чавнă çĕрте ĕçлекенсем: Павлава, Выйготăва, Терентйев т. ыт. йултăшсем илнĕ обйазательствăна ытлашшипех пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Йевдокимăв йултăш кашни кунах плана 200 процент, Павлăва 150 процент тултарса ĕçлеççĕ. Слесăр Антонăвпа ăмăртса ĕçлекен Й. Йевдокимăв йултăш та нормăна ытлашшипех тултарать.

И. Антонăв.

Ворошиловла стрелоксен ăмăртăвĕ

Октабер революцийĕ 21 çул тултарнă уйав йачĕпе Осоавиахимăн Шупашкар хула совечĕ Шупашкар хулинчи ворошиловла стрелоксен пашалпа пемели ăмăртуне организацилет. Ăмăртăва кашни пуçламĕш организацинчен çитĕннисен тата ачасен командисем хутшăнмала.

Чи лайăх стрелоксене тата командăсене премилеме преми фончĕ уйарса хунă.

Комсомол пуçламĕш организацисенче суйлава хатĕрленни

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Азоври атă-пушмак хапрăкĕнчи пропагандист комсомолка А. Йахова кăнтăрлахи перерыва хапрăкри çамрăксене ПССЛКС Тĕпкомĕн комсомол пуçламĕш организацисенче суйлав ирттересси çинчен йышăннă решенине вуласа парать.

Марцинкевич фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Гитлĕр татах хăратать

Октаберĕн 9-мĕшĕнче Гитлĕр Саарбрÿкен хулине (Франци чиккинче) пынă. Унта вăл Францине йунаса сăмах тухса каланă.

Гитлĕр хăйĕн сăмахĕнче Германин Франци чиккинчи вырăнсене çар йĕнĕпе çирĕплетес ĕçе „пĕтĕм вăйа хурсах туса пымала" тата вăл ĕçе çĕнĕ районсене сармала тесе каланă. Унтан Гитлĕр Иден (йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнăскер) йе Дафф Купер (тинĕс министрĕ пулнă, Мÿнхĕнри конференци йышăнăвĕсене хирĕçлесе отставка тухнăскер) Англи влаçĕнче пулнă пулсан, Германин Англи çине вăрçă пуçарса йама шухăшласа хунă çĕршыв çине пăхнă пек пăхмала пулатчĕ, тесе каланă.

Гитлĕр çавăн пек тухса калани Германи фашисăмĕн Францири чура пек лакейĕсен кĕтнĕ ĕмĕтне пысăккăн улталанă. Халь Гитлĕр сăмахĕ хыççăн, пĕр вăхăтра Мÿнхĕнри капитуляцине хÿтлесе çырнă хаçатсен страницисенчех Гитлĕрăн çĕнĕрен тухса каланă сăмахĕсем çине тарăхнипе пăшăрханса çырнисем палăраççĕ.

Англи пичечĕ, Гитлĕр тухса калани „Англин шалти ĕçĕсене ирсĕррĕн хутшăнма хăтланни пулса тăрать, ун пек йапала çак çĕр çул хушшинче халиччен пĕрре те пулманччĕ", тесе палăртать.

(ТАСС).

Словакири фашисла террор

Автономлă Словакире Тисо йертсе пыракан правительства туса хуни çинчен пĕлтернĕччĕ.

Çак правительствăн пĕрремĕш утăмĕ — рабочисен революцилĕ партийĕсене пĕтерни пулчĕ.

Октаберĕн 9-мĕшĕнче Словаки правительстви, Словакири автономиссен фашисла партийĕн ирĕккăмăлне пурнăçа кĕртсе, коммунисла партийе салатса йарасси çинчен тата пĕтĕм Словаки тăрăх коммунисла пичет кăларассине, салатассине чарса лартасси çинчен решени йышăннă. Çаканпа пĕр вăхăтрах правительства Словакине „марксисла тата йеврейле" элементсенчен „тасатма" шухăшлать.

Словаки правительстви распорйажени панă тăрăх, Чехословакири коммунисла партин округ тата район комитечĕсен çурчĕсене пурне те фашиссен штурмовой отрйачĕсем йышăннă. Компартин йертсе пыракан пур работникĕсем патĕнче те ухтарусем тунă.

Словакири компартийе ĕçлеме чарса лартнăшăн чех тата словак халăхĕсен йышлă массисем калама çук тарăхса çилленеççĕ.

(ТАСС).

Республикăлă Испанине пăвса вĕлермели план

Франциri компартин „Йуманите" йатлă хаçатĕнче „Республикăлă Испанине пăвса вĕлермели план" йатлă статйа пичетленсе тухнă. Итали правительстви Испанирен Итали салтакĕсене чĕнсе илме пройект туни, тенĕ статйара, кулăшла йапала. Çапла чĕнсе илессипе ĕнтĕ Франко генерала çапăçакан йĕнĕн прависем парас ĕçре усă курма хăтланаççĕ. Республикăлă Испанине хирĕç хатĕрлекен çĕнĕ преступлени çакăн пек ĕнтĕ.

(ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центр Китайри Цзÿцзйан—Наньчан линийĕ çинче, Деаньран хĕвеланăç йенчи районра китайĕцсем пысăк çĕнтерÿ тунă. Китай çарĕсем Йапонин икĕ бригадине тĕпренех çапса салатнă. Мушиган районĕнче китайĕцсем контрнаступлени пуçланă. Пысăк çапăçу пулса иртнĕ. Çак çапăçура йапонĕцсен пин çынна çити пĕтнĕ.

Çурçĕр Китайра Баодинра (Хебей провинци) октаберĕн 6-мĕшĕнче Китай çарĕсем Йапонин 4.800 çынлă колонни çине кĕтмен çĕртен тапăннă. Хăйар çапăçура йапонĕцсене 300 çын вĕлернĕ тата 80 çынна тыткăна илнĕ. Йапони çарĕсем кайала чакаççĕ. Шахе çывăхĕнчи сăрт патĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

(ТАСС).

Китай çарĕсен пысăк çĕнтерĕвĕ

Китайĕцсем 20 пин йапонĕца пĕтернĕ

Октаберĕн 10-мĕшĕнче çĕрле Учанра (Ухань районĕнчи виçĕ хуларан пĕри), Китай çарĕсем пысăк çĕнтерÿ туни çинчен хаваслă пĕлтерÿ илнĕ. Се Йуй генерал йертсе пыракан Китай çарĕсем Деанрен хĕвеланăç йеннерехри сăртлă районра (Цзÿцзйан-Наньчан линийĕ çинче) Йапони çарĕсен икĕ бригадине тĕппипех пĕтернĕ, вăл бригадăсенче 20 пин çын пулнă. Çак икĕ бригадăран 200 çынна йахăн çеç тарса хăтăлнă.

Ханькоу хулин урамĕсене наци йалавĕсемпе илемлетсе тухнă, урамсенче хаваслă халăх туллийех. Васкавлă кăларнă телеграммăсене сутса ĕлкĕрме çук нумай илеççĕ. Хулан тĕрлĕ пайĕсенче пуçтараннă халăха студентсем Китай çарĕсен çĕнтерĕвĕсем çинчен калакан телеграммăсене сасăпа вуласа параççĕ. Пурин те хаваслă сăн-пит. Пур çĕрте те Китай халăхĕн нацилĕ йурĕсем илтĕнеççĕ.

Йапони Ухань çине наступлени тума пуçланăранпа пилĕк уйăх тулас умĕнхи кунсем Китай çарĕсен чаплă çĕнтерĕвĕпе паллă пулчĕç, ку çĕнтерÿ Китай çарĕсем кăçалхи апрелĕн 7-мĕшĕнче Тайерчжуан патĕнче тунă пысăк çĕнтерÿрен пĕрре те пĕчĕккĕ мар.

(ТАСС).

Йапони захватчикĕсен çухатăвĕсем

Китай çар совечĕн политпай начальникĕн Чжень Чен генералăн Китайри хаçатсем çинче статйа пичетленсе тухнă. Çав статйара Чжень Чен çапла пĕлтерет: кăçалхи ийунĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа çентаберĕн 30-мĕшчен, Йапони Ухань çине наступлени туса пынă тапхарта, Йапони çарĕсен 400 пин çынна çити пĕтнĕ.

Йапони çарĕн çухатăвĕсен проценчĕ йулашки вăхатра чылай пысăкланнă. Йапони çарне час та час алвĕççĕн тытăçса çапăçма тивет, мĕншĕн тесен механизациленĕ чаçсем Уханьри сăртлă районсенче çапăçăва хутшăнма пултараймаççĕпе пĕрех. Йапони çарĕсенчи пысăк çухатусен сăлтавĕсенчен пĕри çав пулать те ĕнтĕ. Йулашки тăватă уйăх хушшинче Йапони çарĕн фронтсенче 96 пин çын вилнĕ, 250 пин çын аманнă (Йапони çарĕсен Çурçĕр Китайри тата çурçĕрти фронтри çухатăвĕсем ку шута кĕмеççĕ). Халĕхи вăхатра Йапони çарĕсен 60 проценчĕ епидемилĕ чирсемпе, пуринчен ытла маларипе асапланаççĕ. Çухатусем çавăн пек пысăк пулса пынă чух, —тет Чжень Чен, —Йапони вăйĕсем 6 уйăх çапăçма кăна çитеççĕ.

„Пирĕн çарпа халăхăн, —тет Чжень Чен, —пĕртеппĕр шухăш тытса—пур йаварлăхсене те çĕнтерес шухăш тытса, хăйсен вăй-халне икĕ хут ÿстерес пулать. Çакна тусан вара, татăклă çĕнтерÿ пирĕн йенче пулать, тесе калама пирĕн пур сăлтавсем те пулаççĕ".

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Октаберĕн 9-мĕшĕнче Ебро йуханшыв районĕнче (хĕвелтухăç фронтĕнче) пăлхавçăсемпе интервентсем 35 танк тата авиаци пулăшнипе республиканĕцсен позицийĕсем çине атака тунă. Республиканĕцсем фашиссен атакисене кунĕпех çĕмĕрсе тăнă, вĕсене пысăк çухатусем кÿнĕ.

Октаберĕн 9-мĕшĕнче каçхине фашиссем тепĕр хут хăйарран тапăнса икĕ позици йышăннă, республиканĕцсем çийĕнчех вăл позицисем çине контратака пуçланă. Вăл позицисем патĕнче халь те çапăçу пырать. Сывлăшри çапăçусенче республикă летчикĕсем фашиссен 6 самолетне персе антарнă.

(ТАСС).

Испанири социалисла тата коммунисла партисен пĕрлĕхĕшĕн йухăм саралать

БАРÇЕЛОНĂ, октаберĕн 9-мĕш. Испанири социалисла тата коммунисла партисен хушшинчи çыхăну комитечĕн ларăвĕнче икĕ партин членĕсем хушшинче пулакан хирĕçÿсене пăхса тухма йатарласа конфликт комиççийĕ тунă. Испанири социалисла тата коммунисла партисен генеральнăй çекретарĕсем Ламонеда тата Хосе Диас иккĕшĕ алă пусса çав партисен вырăнти организацийĕсем патне çыру пичетлесе кăларнă. Вăл çырура вырăнти организацисене хăйсен политикăлă тата практикăлă ĕçĕсенче икĕ парти хушшинче пĕрлĕхлĕ пулса пĕр шухăшпа ĕçлеес пыма хушнă.

Пĕрлĕхлĕ пулас тени—вăл Испанири пĕтĕм рабочи класăн ыйтăвĕ—тесе кăтартать çырура, унтан, вăл пĕрлĕхе çирĕплетес тĕлĕшпе тунă пысăк ĕççене палăртнă. Икĕ парти хушшинче пулмали ыра кăмăллă пĕрлĕхе тăвас çĕрте пур чăрмавсене те сирсе пăрахмала, тенĕ çырура, партисене уйăрса йама тăрăшакансенчен хыта сыхланмала, вĕсене палăртса республикăлă Испанири халăх фрончĕн правительстви умĕнче тăракан кирлĕрен-те кирлĕ пысăк задачăсене пурнăçа кĕртес ĕçре пулăшмала.

(ТАСС).

Мухтавлăн кĕтсе илеççĕ

Амур çинчи Комсомольск хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, октаберĕн 10-мĕшĕнче „Родина" самолетăн паттăр екипажне Комсомольск хулине илсе кайакан катер Амгунь шывĕ тăрăх ишсе Амур çине тухнă. 23 сехет тĕлне катер Комсомольск хулинчен 320 километрта пулнă.

Мухтавлă летчиксене кĕтсе илме Комсомольск хулинчен Косарев йатне панă пăрахут хирĕç тухнă.

(ТАСС).

Колхозниксем мухтавлă летчицăсене саламлаççĕ

„Родина" самолетăн командирĕ В. С. Гризодубăва йултăш ССР Сойуз Верховнăй Совечĕн Киргизири Чуйск суйлав округĕнчен суйланă депутачĕ пулса тăрать.

Чуйск районĕнчи колхозсенче виçĕ совет хĕрарăмĕ ирттернĕ халиччен пулман чаплă вĕçев йачĕпе митингсем тата калаçусем туса ирттереççĕ. Молатăв йачĕпе тăракан йалхуçалăх ертелĕнче пулнă митингра Климăв колхозник, митинга пухăннисемпе пĕр кăмăллă пулса, çапла каланă:

— Валентина Степанăвна Гризодубăва йултăша ССРС Верховнăй Советне хамăртан депутата суйласа йăнăшмарăмăр эпĕр. Вăл пирĕн шанчăка тÿрре кăларчĕ. „Родина" самолетăн паттăр екипажĕшĕн тăрăшнăшăн партипе правительствăна, Сталин йултăша колхозла спаçиба.

Митингра пулнисем Гризодубăва йултăшпа унăн хăйула йултăшĕсем патне саламлă телеграмма йанă.

Колхозниксем хăйсен депутатне хăнана пыма чĕнне.

(ТАСС).

Пӗтӗм Сойузри Коммуниссен (бољшевиксен) Партин ИСТОРИЙӖ

ПСК(б)П Тӗпкомӗн Комиҫҫийӗ редакцилленӗ. **КӖСКЕ КУРС.** **ПСК(б)П Тӗпкомӗ ырланӑ. 1938 ҫ.**

1-мӗш сыпӑкӑн йулашки

3. Ленин ревољуцилӗ ӗҫе тытӑнни. Петербургри „Союз борьбы за освобождение рабочего класса".

Бољшевисӑм џикӗсне хывакан Владимир Ильич Ленин Чӗмпӗр хулинче (халӗ Уљйанӑвск) 1870 ҫулта ҫуралнӑ. 1887 ҫулта Ленин Хусанти университета вӗренме кӗнӗ, анчах студентсен ревољуцилӗ йухӑмӗнче хутшӑнса ӗҫленӗшӗн ӑна часах арӗсленӗ те университетран кӑларнӑ. Ленин Хусанта Федосеев организациленӗ марксисла кружока кӗнӗ. Ленин Самара куҫнӑ хыҫҫӑн, ун тавра хӑвӑртах Самарти марксиссен пӗрремӗш кружокӗ пухӑнса йӗркеленнӗ. Ленин ун чухнех ӗнтӗ хӑй марксисӑма лайӑх пӗлнипе пурне те тӗлӗнтернӗ.

1893 ҫул вӗҫӗнче Ленин Петербурга куҫнӑ. Ленин пирвайхи хут тухса каланисемех Петербургри марксиссен кружокӗсенче хутшӑнса ӗҫлекенсемшӗн вӑйлӑн асра йулнӑ. Маркса калама ҫук тарӑнӑн пӗлни, марксисӑмпа вӑл вӑхӑтри Российйӑн економикӑлӑ тата политикӑлӑ лару-тӑрӑвӗнче усӑ курма пӗлни, рабочи ӗҫӗ ҫӗнтерессине хӗрӳлӗн те ҫирӗппӗн ӗненни, питӗ пысӑк организацилӗ талант ҫаксем пурте Ленина Петербургри марксиссен йышӑннӑ руководителӗ туса хунӑ.

Ленина вӑл хӑй кружоксенче вӗрентнӗ малта пыракан рабочисем хӗрӳлӗн йуратнӑ.

„Пирӗн лекцисем, — аса илнӗ Бабушкин рабочи Ленин рабочисен кружокӗсенче иртернӗ заљатисем ҫинчен, — питӗ чӗрӗ те интереслӗ пулса иртеччӗҫ, епӗр вӑл лекцисемпе пит кӑмӑллӑ пулаттӑмӑр тата йаланах пирӗн лекторӑн ӑс-тӑнӗнчен хӗпӗртесе савӑнаттӑмӑр".

1895 ҫулта Ленин Петербургра рабочисен марксисла кружокӗсене пурне те (вӗсем ӗнтӗ 20 йахӑн пулнӑ) „Союз борьбы за освобождение рабочего класса" йатлӑ пӗр организацине пӗрлештернӗ. Ҫакӑнпа вӑл ревољуцилӗ марксисла рабочи парти тӑвассине хатӗрленӗ.

Ленин „Союз борьбы" умне рабочисен массӑлӑ йухӑмӗпе тачӑрах ҫыхӑнас тата вӗсене политикла йертсе пырас задачӑ лартнӑ. Пропагандисла кружоксене пухнӑ нумай мар хисеплӗ малта пыракан рабочисем хушшинче марксисӑма **пропагандӑлассинчен,** Ленин рабочи класӑн сарлака массисем хушшинче пайанхи кун чи кирлӗ ыйтусем тӑрӑх политикӑлӑ **агитаци** тӑвас ӗҫе куҫма хушнӑ. Ҫакӑн пек массӑлӑ агитаци йенне ҫаврӑнни Российйӑри рабочисен йухӑмӗн малашнехи аталанӑвӗшӗн питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ.

90-мӗш ҫулсенче промышленнӑҫ ҫӗкленсе пынӑ тапхӑр пулнӑ. Рабочисен хисепӗ ӳссе пынӑ. Рабочисен йухӑмӗ вӑйланнӑ. Туллимар кӑтартусем тӑрӑх, 1895 ҫулран пуҫласа 1899 ҫула ҫитиччен 221 пин ҫынран кайа мар рабочисем бастовкӑ тунӑ. Рабочисен йухӑмӗ ҫӗршывӑн политикӑлӑ пурнӑҫӗнчи пысӑк вӑй пулса пынӑ. Рабочи класӑн ревољуцилӗ йухӑмри малти ролӗ пирки марксиссем каланӑ шухӑшсене пурнӑҫ хӑйех ҫирӗплетсе панӑ, вӑл шухӑшсене марксиссем народниксене хирӗҫ кӗрешсе хӳтлесе тӑнӑ.

Ленин йертсе пынипе „Союз борьбы за освобождение рабочего класса" рабочисем економикӑлӑ требованисемшӗн — ӗҫ условисене лайӑхлатассишӗн, ӗҫ кунне чакарассишӗн, ӗҫ укҫине хӑпартассишӗн — кӗрешнине патша йӗркине хирӗҫ политикӑлӑ кӗрешессипе ҫыхӑнтарса пынӑ. „Союз борьбы" рабочисене политикӑлӑ вӗрентсе ӳстернӗ.

Ленин йертсе пынипе Петербургри „Союз борьбы за освобождение рабочего класса" Российйӑра чи малтан **социалисӑма рабочисен йухӑмӗпе пӗрлештерессине** пурнӑҫа кӗртсе пыма тытӑннӑ. Мӗнле те пулин хапрӑкра стачкӑ тухсанах, „Союз борьбы", хӑйӗн кружокӗсенче хутшӑнса ӗҫлекенсем урлӑ предприйатисенчи лару-тӑрӑва лайӑх пӗлсе тӑнӑскер, ҫийӗнчех листовкӑсем кӑларнӑ, социалисӑмла прокламацисем кӑларнӑ. Вӑл листовкӑсенче фабрикантсем рабочисене хӗсӗрленине питленӗ, рабочисен хӑйсен интересӗсемшӗн мӗнле кӗрешмелине ӑнлантарса панӑ, рабочисен требованийӗсене пичетленӗ. Листовкӑсем капиталисӑмӑн йухан-суранӗсем ҫинчен, рабочисен ҫуклӑ пурнӑҫӗ ҫинчен, вӗсен 12—14 сехетлӗ ытла та йывӑр ӗҫӗ ҫинчен, вӗсен правасӑр пурнӑҫӗ ҫинчен пӗтӗм чӑнлӑха каласа панӑ. Кунтах тивӗҫлӗ политикӑлӑ требованисем те кӑларса тӑратнӑ. 1894 ҫул вӗҫӗнче Ленин Бабушкин рабочипе пӗрле Петербургри Семйанниковски савӑтӗнче забастовкӑ тунӑ рабочисем патне ҫавӑн пек пӗрремӗш агитацилӗ листовкӑ тата чӗнсе калани ҫырса йанӑ. 1895 ҫулта кӗркунне Ленин Торнтон хапрӑкӗнче забастовкӑ тӑвакан рабочисемпе работницӑсем патне листовкӑ ҫырнӑ. Вӑл хапрӑк мӗлйуншар тенкӗ услам илекен англи фабрикантӗсен пулнӑ. Кунта ӗҫ кунӗ 14 сехет ытла пулнӑ, ткачсем уйӑхра 7 тенке йахӑн ҫеҫ ӗҫлесе илнӗ. Забастовкӑ рабочисемшӗн ӑнӑҫулӑ пулнипе иртнӗ. Кӗске вӑхӑтрах „Союз борьбы" ҫакнашкал вуншар листовкӑсем, тӗрлӗ хапрӑксенчи рабочисене чӗнсе каланисем пичетлесе кӑларнӑ. Кашни ҫакӑн пек листовкӑ рабочисен кӑмӑлне вӑйлӑн ҫӗкленӗ. Рабочисем вӗсене социалиссем пулӑшнине, хӳтленине курнӑ.

„Союз борьбы" йертсе пынипе 1896 ҫулта ҫулла Петербургри пир-авӑр тӗртекен 30 пин рабочисен забастовки пулса иртнӗ. Вӗсен тӗп требованийӗ — ӗҫ кунне чакарасси пулнӑ. Ҫак забастовкӑ хӗснипе патша правительствин 1897 ҫулти ийунӗн 2-мӗшӗнче ӗҫ кунӗ 11 1/2 сехетрен ытла пулмала марри ҫинчен саккун кӑлармала пулнӑ. Ҫак саккуна кӑларсан ӗҫ кунне пӳлни пулман.

1895 ҫулти декабӗрте патша правительстви Ленина арӗсленӗ. Ленин тӗрмере те ревољуцилӗ кӗрешӗве туса пыма чарӑнман. Вӑл „Союз борьбы" организацине тӗрмерен брошӳрӑсемпе листовкӑсем йарса парса, хӑйӗн канашӗсемпе тата кӑтартӑвӗсемпе пулӑшнӑ. Тӗрмере Ленин „О стачках" брошӳрӑ тата „Царскому правительству" листовкӑ ҫырнӑ, вӑл листовкӑра патша правительстви тискеррӗн пусмӑрланине тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ. Тӗрмерех Ленин парти программин пройектне ҫырса хатӗрленӗ (ӑна медицина кӗнекин строкисем хушшинче сӗтпе ҫырнӑ пулнӑ).

Петербургри „Союз борьбы" Российйӑри ытти облӑҫсемпе хуласенче те рабочисен кружокӗсене ҫавнашкал союзсене пӗрлештерессине хӑватлӑн хускатнӑ. 90-мӗш ҫулсен варринче Закавказйӗре марксисла организацисем пуҫланса кайаҫҫӗ. 1894 ҫулта Мускавра Мускаври „Рабочий союз" пулса тӑрать. Ҫӗпӗрте 90-мӗш ҫулсен вӗҫӗнче Ҫӗпӗрти „Социал-демократический союз" организациленет. 90-мӗш ҫулсенче Иваново-Вознесенскра, Йарослављре, Костромара марксисла группӑсем пулса кайнӑ, вӗсем кайарахпа „Северный союз социал-демократической партии" йатлӑ организацине пӗрлешнӗ. Дон-ҫи-Ростовра, Йекатеринославра, Кийӗвра, Николайевра, Тулара, Самарта, Хусанта, Орехово-Зуевӑра тата ытти хуласенче 1895—1900 ҫулсенче социал-демократла группӑсемпе сойузсем пулса тӑраҫҫӗ.

Ленин каланӑ тӑрӑх, Петербургри „Сойуз борьбы за освобождение рабочего класса" организаци **рабочисен йухӑмӗ ҫине тайӑнакан ревољуцилӗ партин пирвайхи чӑн-чӑн пуҫламӗшӗ пулнӑ,** ҫакӑнта пулнӑ унӑн пӗлтерӗшӗ.

Российйӑра марксисла, социал-демократла парти тӑвассишӗн пынӑ малашнехи хӑйӗн ӗҫӗнче Ленин Петербургри „Союз борьбы" организацин ревољуцилӗ опычӗ ҫине тайӑнса ӗҫленӗ.

Ленина тата унӑн ҫывӑх соратникӗсене арӗсленӗ хыҫҫӑн, Петербургри „Союз борьбы" руководствин составӗ чылай улшӑннӑ. Хӑйсене — „ҫамрӑксем", Ленина тата унӑн соратникӗсене „стариксем" тесе чӗнекен ҫӗнӗ ҫынсем тупӑннӑ. Вӗсем политикӑлӑ йӑнӑш ҫул тытса пыма пуҫланӑ. Вӗсем рабочисене хуҫасене хирӗҫ пыракан економикӑлӑ кӗрешӗве ҫеҫ чӗнмеле тенӗ, политикӑлӑ кӗрешӳ пирки вӗсем — ку либераллӑ буржуази ӗҫӗ, политикӑлӑ кӗрешӗве йертсе пырасси ун аллинче пулмала, тенӗ.

Ҫавӑн пек ҫынсене „економиссем" тесе калама пуҫланӑ.

Ку вӑл Российйӑри марксисла организацисен ретӗнчи оппортунисла, соглашательле пӗрремӗш группӑ пулнӑ.

4. Ленин народничествӑна тата „легаљнӑй марксисӑма" хирӗҫ кӗрешни. Ленинӑн рабочи класпа хресченсен сойузне тӑвас идейи. Российйӑри социал-демократла рабочи партин пӗрремӗш сиесӗ.

Плеханӑв 80-мӗш ҫулсенчех народникла шухӑшсен системине тӗппӗрен ҫапса салатнӑ пулин те, ҫапах та 90-мӗш ҫулсенче ревољуцилӗ ҫамрӑксен хӑшпӗр пайӗ хушшинче народникла шухӑшсене кӑмӑллани пулнӑ-ха. Ҫамрӑксен пӗр пайӗ ҫаплах Российйӑ капиталисӑмлӑ ҫулпа аталанассинчен иртсе кайма пултарать, ревољуцире рабочи клас мар, хресченсем тӗп вырӑн йышӑнса тамала тесе шухӑшланӑ. Народниксен йулашкийӗсем Российйӑра марксисӑма сарассине пур майпа та чӑрмантарма тӑрӑшнӑ, пур майпа та марксиссен йатне варалама тӑрӑшса, вӗсене хирӗҫ кӗрешсе пынӑ. Марксисӑма малала та сарса пыма тата социал-демократла партине туса хумалли майсене тума народничествӑна идейӑ тӗлӗшне вӗҫне ҫитийех **ҫапса ҫӗмӗрмеле** пулнӑ.

Ку ӗҫе Ленин туса иртернӗ.

Хӑйӗн „Что такое „друзья народа" и как они воюют против социал-демократов?" кӗнекинче (1894 ҫул) Ленин народниксен чӑн-чӑн сӑнпитнӗ, вӗсем халӑхӑн суйа „тусӗсем" пулнине, чӑннипе халӑха хирӗҫ пынине вӗҫне ҫитийех тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ.

90-мӗш ҫулсенчи народниксем чӑннипе тахҫанах патша правительствине хирӗҫ ревољуцилӗ кӗрешессинчен пӗтӗмпех парӑннӑ. Либераллӑ народниксем патша правительствипе килӗшме вӗрентнӗ. „Вӗсем простӑ шухӑшлаҫҫӗ, — ҫырнӑ Ленин вӑл вӑхӑтри народниксем ҫинчен, — ку правительствӑран лайӑххрах та йапатарах ыйтсан, вӑл пурне те лайӑх туса пама пултарать" (**Ленин,** т. I, стр. 161).

90-мӗш ҫулсенчи народниксем йалти чухӑнсен пурнӑҫӗ ҫине, йалти класлӑ кӗрешӳ ҫине, чухӑнсене кулаксем експлуатацилени ҫине куҫ хупса пӑхнӑ, кулакла хуҫалӑхсем аталаннине мухтанӑ. Тӗрӗссипе вӗсем кулаксен интересӗсене палӑртакансем пулнӑ.

Ҫав вӑхӑтрах народниксем хӑйсен журналӗсенче марксиссене тулланӑ. Народниксем вырӑс марксиссен шухӑшӗсене йурийех пӑсса тата суйӗҫтерсе, марксиссем йалан йухӑнтарасшӑн тӑнӑ пек, марксиссем „кашни мужике хапрӑк хуранӗнче пӗҫерсе кӑларасшӑн" тӑнӑ пек ӗнентернӗ. Народниксен ҫак суйа критикине тӑрӑ шыв ҫине кӑларса, Ленин ҫакна кӑтартса панӑ: ӗҫ марксиссем мӗн тӑвас тенинче мар, Российйӑра капиталисӑм чӑннипе аталанса пынинче, капиталисӑм аталаннӑ вӑхӑтра пролетариат хисепӗ пурпӗрех пысӑкланса пырать. Ҫак пролетариат капиталисӑмла стройа пӗтерекен пулать.

Ленин халӑхӑн чӑн-чӑн тусӗсем, помещиксемпе капиталиссен пусмӑрне пӗтерессишӗн, патша йӗркине пӗтерессишӗн тӑракансем — народниксем мар, марксиссем пулса тӑнине кӑтартса панӑ.

Ленин хӑйӗн „Что такое друзья народа" кӗнекинче патша йӗркине, помещиксене, буржуазийе сирпӗтсе антармали май пулса тӑракан рабочисемпе хресченсен ревољуцилӗ сойузӗн идейине чи пирвай кӑларса тӑратнӑ.

Ленин ҫав тапхӑрти хӑйӗн ӗҫӗсенче чылайӗшӗнче народниксен тӗп ушкӑнӗ — народоволецсем, кайарахпа — народниксен ӗҫӗсене малала туса пыракансем — есерсем усӑ курнӑ политикӑлӑ кӗрешӳ майӗсене, уйрӑмӑнах индивидуаљнӑй террор тактикине критикленӗ. Ленин ӑна ревољуцилӗ йухӑмшӑн сийенлӗ тесе шутланӑ, мӗншӗн тесен вӑл массӑсен кӗрешӗвне пӗччен ҫынсем-геройсем кӗрешнипе улӑштарнӑ. Вӑл халӑхӑн ревољуцилӗ йухӑмне ӗненменнине пӗлтернӗ.

„Что такое друзья народа" кӗнекере Ленин вырӑс марксисӗсен тӗп задачисене палӑртса хунӑ. Ленин шухӑшӗпе вырӑс марксисӗсен пуринчен малтан марксисла сапаланчӑк кружоксенчен пӗрлӗхлӗ социалисла рабочи парти организацилемеле пулнӑ. Ленин малала: шанах Российйӑри рабочи клас хресченсемпе сойузла пулса патша самодержавине сирпӗтсе антарать, ун хыҫҫӑн вырӑс пролетариачӗ ӗҫҫынисемпе тата експлуатациленекен массӑсемпе сойузлӑ пулса, ытти ҫӗршывсенчи пролетариатпа йунашар, политикӑлӑ усӑ кӗрешӗвӗн тӳрӗ ҫулӗпе ҫӗнтерӳлӗ коммунисла ревољуци патне кайать, тесе кӑтартса панӑ.

Ҫапла вара, 40 ҫул ытла кайала Ленин рабочи класӑн кӗрешӳ ҫулне тӗрӗс кӑтартса панӑ, унӑн рољне — вӑл обществӑн малта пыракан ревољуцилӗ вӑйӗ пулса тӑнине палӑртнӑ, хресченсен рољне — вӗсем рабочи класӑн сойузникӗ пулмалине палӑртнӑ.

Ленин тата ун майлисем народничествӑна хирӗҫ кӗрешни 90-мӗш ҫулсенчех народничествӑна идейӑ тӗлӗшӗнчен тӗппренех ҫӗмӗрсе тӑкни патне илсе ҫитернӗ.

Ленин „легаљнӑй марксисӑма" хирӗҫ кӗрешни те ҫавӑн пекех пит пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Историре йаланах пулнӑ пек, обществӑлӑ пысӑк йухӑм ҫумне йалан вӑхӑтла „попутчиксем" пырса ҫыпҫӑнаҫҫӗ. **„Легаљнӑй марксиссем"** тенӗскерсем те ҫавӑн пек „попутчиксем" пулнӑ. Российйӑра марксисӑм анлӑн сарӑлма пуҫланӑ. Вара буржуалӑ интеллигентсем те марксисла тумсем тӑхӑнма тытӑннӑ. Вӗсем легаљнӑй, урӑхла каласан, патша правительстви ирӗк панӑ хаҫатсемпе журналсенче хӑйсен статйийисене пичетленӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ вӗсене „легаљнӑй марксиссем" теме пуҫланӑ.

Вӗсем народничествӑна хирӗҫ хӑйсене майлӑ кӗрешнӗ. Анчах ҫак кӗрешӳпе тата марксисӑм йалавӗпе вӗсем рабочисен йухӑмне буржуалӑ обществӑн интересӗсене буржуази интересӗсене пӑхӑнтарасшӑн тата йураттарасшӑн усӑ курма хӑтланнӑ. Вӗсем Маркс вӗрентӗвӗнчен чи кирлине — пролетарилӗ ревољуци ҫинчен, пролетари диктатури ҫинчен вӗрентнине кӑларса ывӑтнӑ. Паллӑ легаљнӑй марксист Петр Струве буржуазине мухтанӑ, капиталисӑма хирӗҫ ревољуцилӗ кӗрешес вырӑнне, — „хамӑрӑн куљтурсӑрлӑха йышӑнма тата капиталисӑм патне вӗренме кайма" чӗннӗ.

Народниксене хирӗҫ кӗрешессинче Ленин „легаљнӑй марксиссемпе", вӗсемпе народниксене хирӗҫ усӑ курма, сӑмахран, народниксене хирӗҫ сборник пӗрле пичетлесе кӑларма, вӑхӑтлӑха килӗшӳ тума йурать, тесе шутланӑ. Анчах ҫав вӑхӑтрах Ленин „легаљнӑй марксиссене", вӗсен либераллӑ-буржуалӑ ӑшчиккине тӑрӑ шыв ҫине кӑларса, пӗтӗм ҫивӗчлӗхпе критикленӗ.

Ҫав „попутчиксенчен" нумайӗшӗсем кайран кадетсем пулса тӑнӑ (вырӑс буржуазийӗн тӗп партийӗ), граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнче чи усал шургвардейӗцсем пулса кайнӑ.

Петербургри, Мускаври, Кийӗври тата ытти хуласенчи „Союз борьбы" организацисемпе пӗрле Российйӑн хӗвеланӑҫӗнчи нацилӗ окраинисенче те ҫавӑн пек социал-демократла организацисем шӑтса тухнӑ. 90-мӗш ҫулсенче Пољшӑри националисла партирен марксисла елементсем уйӑрӑлнӑ та „Социал-демократия Польши и Литвы" йатлӑ организацине туса хунӑ. 90-мӗш ҫулсен вӗҫӗнче Латви социал-демократин организацийӗсем пулса тӑраҫҫӗ. 1897 ҫулти Октябӗрте Российйӑн хӗвеланӑҫ кӗпӗрнисенче пӗтӗм йеврейсен социал-демократла сойузне — Бунд туса хунӑ.

1898 ҫулта „Союз борьбы" организацисем чылайӗшӗ Петербургри, Мускаври, Кийӗври, Йекатеринославри сойузсем тата Бунд социал-демократиле партине пӗрлешме пӗрремӗш хут тытӑнса пӑхнӑ. Ҫак тӗллевпе вӗсем 1898 ҫулти март уйӑхӗнче Минскра Российйӑри социал-демократла рабочи партин (РСДРП) пӗрремӗш сиесне пуханнӑ.

РСДРП 1-мӗш сиесӗнче мӗн пурӗ 9 ҫын пулнӑ. Ленин сиесра пулман, мӗншӗн тесен вӑл ҫав вӑхӑтра Ҫӗпӗрте ссылкӑра пулнӑ. Партин сиесра суйланӑ Тӗп Комитетне часах арӗсленӗ. Сиес йачӗпе кӑларнӑ „Манифест" нумай йенӗпе ҫителӗксӗр пулнӑ. Унта пролетариат политикӑлӑ влаҫа ҫӗнтерсе илес задачӑ ҫинчен каламан пулнӑ, пролетариат гегемонийӗ ҫинчен нимӗн те каламан, пролетариатӑн вӑл патша йӗркине тата буржуазине хирӗҫ кӗрешес ҫӗрти сойузникӗсем ҫинчен каламан пулнӑ.

Сиес хӑйӗн решенийӗсенче тата „Манифестра" Российйӑри социал-демократла рабочи партине туса хуни ҫинчен пӗлтернӗ.

Ревољуцилӗ-пропагандӑлӑ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ ҫак формаљнӑй актра пулнӑ РСДРП 1-мӗш сиесӗн пӗлтерӗшӗ.

Анчах та, пӗрремӗш сиес пулса иртнӗ пулин те, Российйӑра марксисла социал-демократла партине чӑннипе туса хуман пулнӑ-ха. Сиес марксисла уйрӑм кружоксемпе организацисене организацилӗ пӗрлештерме тата ҫыхӑнтарма май кӳреймен. Вырӑнти организацисен ӗҫӗнче пӗр пек лини пулман-ха, парти программи, парти уставӗ пулман, пӗр центртан йертсе пыни пулман. Ҫакна пула тата ытти чылай сӑлтавсене пула вырӑнти организацисенче идейӑлӑ сапаланчӑклӑх пысӑкланса пыма пуҫланӑ, ку вӑл рабочисен йухӑмӗнче оппортунисла йухӑма — „економисӑма" вӑйланма йурӑхлӑ условисем туса панӑ.

Ҫак сапаланчӑклӑха пӗтерме оппортунисла пӑркаланусене ҫӗнтерме тата Российйӑра социал-демократла рабочи парти туса хурассине хатӗрлеме Ленин тата вӑл организациленӗ „Искра" хаҫат темиҫе ҫул хушши вӑйлӑн ӗҫлени кирлӗ пулнӑ.

5. Ленин „економисӑма" хирӗҫ кӗрешни. Ленинла хаҫат „Искра" тухма пуҫлани.

РСДРП 1-мӗш сиесӗнче Ленин пулман. Ҫав вӑхӑтра вӑл Ҫӗпӗрте, Шушенск йалӗнче, ссылкӑра пулнӑ, унта ӑна патша правительстви „Союз борьбы" ӗҫӗ тӑрӑх Петербург тӗрминче нумай вӑхӑт хушши тытнӑ хыҫҫӑн хӑваласа йанӑ.

Анчах ссылкӑра та Ленин ревољуцилӗ ӗҫе малала туса пынӑ. Ссылкӑра Ленин пит паха научнӑй ӗҫе „Развитие капитализма в России" йатлӑ, народничествӑна идейӑ тӗлӗшпе аркатса тӑкассине туса ҫитернӗ кӗнекене ҫырса пӗтернӗ. Унтах вӑл „Задачи русских социал-демократов" йатлӑ паллӑ брошӳрӑна ҫырнӑ.

Ленин ревољуцилӗ-практикӑлӑ ӗҫе тӳрременех хутшӑнайман пулин те, вӑл ҫапах практиксемпе хӑшпӗр ҫыхӑнусене сыхласа хӑварма пултарнӑ, ссылкӑран вӗсем патне ҫырусем йарса илнӗ, ыйтса пӗлнӗ, вӗсене канашсем панӑ. Ленин вӑл вӑхӑтра „економиссем" ҫинчен тӑракан ыйтупа уйрӑмӑнах ӗҫленӗ. „Економисӑм" соглашательствӑн, оппортунисӑмӑн тӗп йачейки пулса тӑнине, рабочи йухӑмра „економисӑм" ҫӗнтерни пролетариатӑн ревољуцилӗ йухӑмӗ ҫӗмӗрӗлни, марксисӑм парӑнни пуласине Ленин кирек камран та лайӑххрах ӑнланнӑ.

Ҫавӑнпа Ленин „економиссене" вӗсем палӑрнӑ малтанхи кунсенчех ҫӗмӗрме тытӑннӑ.

„Економиссем": рабочисен економикӑлӑ кӗрешӗве ҫеҫ туса пымала, политикӑлӑ кӗрешӳ тӗлӗшпе вара, ку кӗрешӗве либераљнӑй буржуази туса пытӑр, ӑна рабочисем пулӑшса пымала, тенӗ. Ленин „економиссен" ҫавӑн пек проповӗдне марксисӑмран пӑрӑнни, рабочи клас ваљџи хӑйне уйрӑм политикӑлӑ парти кирлине йышӑнманни, рабочи класа политикӑ тӗлӗшпе буржуази ҫумӗнчи хушмаљчӑ туса хума пӑхни вырӑнне хунӑ.

1899 ҫулта „економиссен" группи (Прокопович, Кускова тата ыттисем те, кайарахпа кадетсем пулса тӑнӑскерсем) хӑйӗн манифестне кӑларнӑ. Вӗсем ревољуцилӗ марксисӑма хирӗҫ тӑнӑ та пролетариатӑн хӑйне уйрӑм политикӑлӑ партине туса хурассине пӑрахӑҫ тума, рабочи клас хӑй тӗллӗн политикӑлӑ требованисем тӑратассине пӑрахӑҫлама сӗннӗ. „Економиссем": политикӑлӑ кӗрешӳ либераљнӑй буржуазин ӗҫӗ, рабочисене илес пулсан, вӗсем хӑйсен хуҫисене хирӗҫ економикӑлӑ кӗрешни те ҫителӗклӗ, тесе шутланӑ.

Ҫак оппортунисла документпа паллашнӑ хыҫҫӑн, Ленин ҫывӑхра пурӑнакан политикӑлӑ ӗҫпе ссылкӑна йанӑ марксиссен канашлуне пухнӑ, вара Ленин йертсе пынӑ 17 йулташ „економиссен" шухӑшӗсене хирӗҫ пит хытӑ питлекен протест йышӑннӑ.

Ленин ҫырнӑ ҫак протеста пӗтӗм Российйӑри марксисла организацисене сарнӑ пулнӑ, вӑл Российйӑра марксисла шухӑш тата марксисла парти аталанас ӗҫре пит пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ.

Вырӑс „економиссем" те йут ҫӗршывсенчи социал-демократла партисенчи марксисӑм противникӗсен, бернштейнианецсем тенӗскерсен, урӑхла каласан, оппортунис Бернштейн майлисен шухӑшнех сарса пынӑ.

Ҫавӑнпа Ленин „економиссене" хирӗҫ кӗрешни ҫав вӑхӑтрах пӗтӗм тӗнчери оппортунисӑма хирӗҫ кӗрешни пулнӑ.

„Економисӑма" хирӗҫ, пролетариатӑн хӑйне уйрӑм политикӑлӑ партине тӑвассишӗн тӗп кӗрешӗве Ленин организациленӗ вӑрттӑн тухса тӑнӑ „Искра" хаҫат туса иртернӗ.

1900 ҫулӑн пуҫламӗшӗнче Ленин тата „Союз борьбы" организацин ытти членӗсем Ҫӗпӗрти ссылкӑран Российйӑна таврӑннӑ. Ленин пӗтӗм вырӑссен вӑрттӑн тухса тӑракан марксисла пысӑк хаҫатне тума шут тытнӑ. Вӑл вӑхӑтра Российйӑра пулнӑ марксисла вак кружоксемпе организацисем нумайӗшӗ пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса тӑман пулнӑ-ха. Ҫав вӑхӑтра, Сталин калашле, „кустарничествӑпа кружковщинӑ партийе ҫӳлтен пуҫласа айала ҫитийех кӑшласа тӑнӑ" чухне, „идейӑлӑ сапаланчӑклӑх партин шалти пурнӑҫӗнче характӗрнӑй паллӑ пулса тӑнӑ чухне", пӗтӗм вырӑссен вӑрттӑн тухса тӑракан хаҫатне тӑвасси вырӑс ревољуцилӗ марксисӗсен тӗп задачи пулнӑ. Ҫавӑн пек хаҫат кӑна сапаланчӑк пулнӑ марксисла организацисене пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтарма тата чӑн-чӑн парти тӑвассине хатӗрлеме пултарнӑ.

Анчах полицисем хытӑ хӗсӗрленӗ пирки ҫавнашкал хаҫата патша Российйӗнче организацилеме май килмен. Хаҫата пӗр-ик уйӑхранах патша сыщикӗсем йӗрлесе тупса, ҫӗмӗрсе тӑкнӑ пулӗччӗҫ. Ҫавӑнпа Ленин ӑна йут ҫӗршывра кӑларма шутланӑ. Унта хаҫата чи ҫӳхе те ҫирӗп хут ҫине пичетленӗ те вӑрттӑн майпа Российйӑна йарса тӑнӑ. „Искра" хаҫатӑн уйрӑм номӗрӗсене Российйӑра Бакури, Кишињоври, Ҫӗпӗрти вӑрттӑн типографисенче ҫӗнӗрен пичетленӗ.

1900 ҫулта кӗркунне Владимир Ильич йут ҫӗршыва „Освобождение труда" группӑри йулташсемпе пӗтӗм вырӑссен политикӑлӑ хаҫатне кӑларасси ҫинчен каласса татӑлма кайнӑ. Ҫакӑн ҫинчен Ленин ссылкӑра тӗплӗн шухӑшласа хунӑ. Ссылкӑран таврӑннӑ чухне ҫул май Ленин ку ыйту тӑрӑх Уфара, Псковра, Мускавра, Петербургра темиҫе канашлу иртернӗ. Пур ҫӗрте те вӑл йулташсемпе вӑрттӑн ҫыру ҫӳретмели шифрсем пирки, литературӑ йамали адрӗссем тата ытти пирки каласса татӑлнӑ, вӗсемпе пулас кӗрешӗвӗн планне сӳтсе-йавнӑ.

Патша правительстви Ленин унӑн хӑрушӑ тӑшманӗ пулнине туйнӑ. Патша охранникӗ, жандарм Зубатӑв, хӑйӗн вӑрттӑн ҫырӑвӗнче „ревољуцире халӗ Уљйанӑвран пысӑкраххи никам та ҫук" тесе ҫырнӑ, ҫавӑнпа вӑл Ленина вӗлерессине организацилеме кирлӗ, тесе шутланӑ.

Йут ҫӗршыва ҫитсен Ленин „Освобождение труда" группипе, урӑхла каласан, Плеханӑвпа, Аксељродпа, В. Засуличпа „Искра" хаҫата пӗрле кӑларасси ҫинчен каласса татӑлнӑ. Хаҫат кӑларас пӗтӗм плана малтан пуҫласа вӗҫне ҫитиччен Ленин туса хатӗрленӗ.

1900 ҫулти декабӗрте йут ҫӗршывра „Искра" хаҫатӑн пӗрремӗш номӗрӗ тухнӑ. Хаҫат йачӗн айӗнче: **„Хӗлхемрен ҫулӑм йалкӑшса кайӗ"** текен сӑмахсем (епиграф) пулнӑ. Ҫак сӑмахсене декабристсем Пушкин поет патне ҫырнӑ ответран илнӗ, вӗсем патне Пушкин Ҫӗпӗрти ссылкӑна саламла ҫыру йанӑ пулнӑ.

Чӑннипех ӗнтӗ, Ленин чӗртнӗ „Искра"-ран кайарахпа аслӑ ревољуцилӗ пушарӑн ҫулӑмӗ йалкӑшса кайнӑ, вӑл дворйанла-помещикла патша монархине тата буржуази влаҫне тӗпӗ-йӗрӗпех ҫунтарса йанӑ.

Малалли 3-мӗш страницӑра

МАЛАЛИ

КӖСКЕ ВЫВӐДСЕМ

Марксисла социал-демократла рабочи парти Российӑра чи малтан народничествӑна хирӗҫ, унӑн йанӑш тата революци ӗҫӗшӗн сийенлӗ шухӑшӗсене хирӗҫ кӗрешӳре пулса пынӑ.

Народниксен шухӑшӗсене идейӑ тӗлӗшӗнчен ҫӗмӗрсе тӑкнипе кӑна Российӑра марксисла рабочи партти тума выран тасатса хатӗрлеме май килнӗ. Иртнӗ ӗмӗрӗн 80-мӗш ҫулӗсенче народничествӑна Плехановпа унӑн „Освобождение труда“ группи татӑклӑн ҫапса аркатнӑ.

Ленин 90-мӗш ҫулсенче народничествӑна идейӑ тӗлӗшӗнчен ҫӗмӗрсе тӑкассине вӗҫлесе ҫитернӗ, народничествӑна тӗппипех пӗтерсе хунӑ.

1883 ҫулта пуҫланнӑ „Освобождение труда“ Российӑра марксисӑма сарас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫ туса иртернӗ, теори тӗлӗшӗнчен социал-демократин никӗсне хывнӑ тата рабочисен йухӑмӗ патнеле пӗрремӗш утӑм тунӑ.

Капиталисӑм аталанса пынӑ май Российӑра промышлӗннӑй пролетариат хисепӗ хӑвӑрт ӳснӗ. 80-мӗш ҫулсен варринче рабочи клас организацилӗ кӗрешӳ ҫине, организацилӗ стачкӑсем туса массӑлӑ выступленисем тӑвас ҫул ҫине тӑнӑ. Анчах марксисла кружоксемпе группӑсем пропагандӑ ӗҫне ҫеҫ туса пынӑ, рабочи клас хушшинче массӑлӑ агитаци тума пуҫлани кирлине ӑнланса илмен пулнӑ, ҫавӑнпа та рабочисен йухӑмӗпе практикӑлӑ ҫыхӑнман, ӑна йертсе пыман пулнӑ.

Ленин Петербургри „Союз борьбы за освобождение рабочего класса“ организацине туни (1895 ҫул),—вӑл организаци рабочисем хушшинче массӑлӑ агитаци тума тата массӑлӑ стачкӑсене йертсе пыма пуҫланӑ,—ҫӗнӗ етап пуҫланнине—рабочисем хушшинче массӑлӑ агитаци тума пуҫланине тата марксисӑма рабочисен йухӑмӗпе ҫыхӑнтарнине пӗлтернӗ. Петербургри „Союз борьбы за освобождение рабочего класса“ Российӑри пролетариатӑн революцилӗ партин пирвайхи пуҫламӗшӗ пулнӑ. Петербургри „Союз борьбы“ хыҫҫӑн промышлӗннӑҫлӑ тӗп центрсенче пуринче те, ҫавнашкалах окраинӑсенче те марксиссен организацийӗсем пулса тӑнӑ.

1898 ҫулта, ӑнӑҫлӑ пулман пулин те, марксисла социал-демократла организацисене партине пӗрлештерме пкрвайхи хут тытӑнса пӑхнӑ—РСДРП 1-мӗш сийесӗ пулса иртнӗ. Анчах ҫак сийес партине туса хурайман-ха: партин программи те, уставӗ те, пӗр центртан йертсе пыни те пулман, марксисла уйрӑм кружоксемпе группӑсем хушшинче нимле ҫыхӑну та пекех пулман.

Сапаланса тӑнӑ марксисла организацисене пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтарса пӗр партине пӗрлештерме Ленин революцилӗ марксиссен малтанхи, пӗтӗм выроссен хаҫатне—„Искра“-на тӑвас плана кӑларса тӑратса пурнӑҫа кӗртнӗ. Ҫак тапхӑрта пӗрлӗхлӗ политикӑлӑ рабочи парти тӑвассин тӗп противникӗсем „економиссем“ пулнӑ. Вӗсем ҫавӑн пек парти кирлине йышӑнман. Вӗсем уйрӑм группӑсен сапаланчӑклӑхне тата кустарничествӑна хута кӗнӗ. Имӗннӑ ҫавсене хирӗҫ ҫапнӑ та ӗнтӗ Ленинпа вӑл организацилӗнӗ „Искра“.

„Искра“ хаҫатӑн малтанхи номӗрӗсене кӑларни (1900—1901 ҫулсем) ҫӗнӗ тапхӑра—сапаланчӑк группӑсемпе кружоксенчен Российӑри пӗрлӗхлӗ социал-демократла рабочи партине чӑннипех тунӑ тапхӑра куҫни пулса тӑнӑ.

(ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсӗн малали „Чӑваш Коммунӗ“ хаҫатӑн ҫитес номӗрӗсенче пичетленет).

Пуранмали ҫуртсене йусасси тата вӗсене хӗллене хатӗрлесси ҫинчен

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1938 ҫулти октябрӗн 5-мӗшӗнче йышӑннӑ постановлени

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫакна палӑртать: Коммуналлӑ хуҫалӑх Халӑх Комиссариачӗ тата хула совечӗсем пурӑнмали ҫуртсене йусас тата вӗсене хӗллене хатӗрлес ӗҫсене сарса пыман, ҫапла вара ССР Сойуз Тӗпӗҫтӑвкомӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1937 ҫулти октябрӗн 17-мӗшӗнче тата РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ кӑҫалхи апрелӗн 17-мӗшпе сентябрӗн 1-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленисене пурнӑҫа кӗртмен.

Йетӗрне тата Ҫӗмӗрле хулисемсӗр пуҫне, хуласенче пурӑнмали ҫуртсене капиталлӑ ремонт тӑвас плана пурнӑҫа кӗртмен. Кӑҫалхи октябрӗн 1-мӗш тӗлне республикӑ тӑрӑх йусама палӑртнӑ 73 ҫуртран 37 ҫуртне ҫеҫ йусанӑ, вӑл шутран: Шупашкар хулинче йусама палӑртнӑ 21 ҫуртран 16 ҫуртне, Улатӑр хулинче йусама палӑртнӑ 31 ҫуртран 16 ҫуртне ҫеҫ йусанӑ.

Хула совечӗсен председателӗсем пурӑнмали ҫуртсене капиталлӑ ремонт тӑвас ӗҫ валҫи укҫа-тенкӗсене вӑхӑтра тата пӗтӗмӗшпех пухассишӗн кӗрешмеҫҫӗ. Октябрӗн 1-мӗш тӗлне Шупашкар хули тӑрӑх пурӑнман ҫурт-йӗрсемшӗн арендӑ укҫи 50 пин тенкӗ, вӑл шутран 1937 ҫулшӑн 20 пин тенкӗ тата хватер укҫи йенӗпе 14,5 пин тенкӗ тӳлеменнине ҫавӑнпа ҫеҫ ӑнлантарса пама пулать. Канаш, Улатӑр тата Ҫӗрпӳ хулисенче те ӗҫсем ҫавӑн пекех.

Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ хула совечӗсен ҫуртйӗр управленисем хватере йышӑнса тӑраканӑн ӗҫукҫи пысӑккӑшне шута илмесӗр хватер укҫи илнине питӗ те тӗрӗс мар, тесе шутлать, ҫавна пула ҫуртйӗрсене йусама кайакан укҫа-тенкӗ сумми чылайах пухӑнмасӑр йулать.

Шупашкар хула совечӗн пурӑнмали ҫуртйӗрсен управленин начальникӗ пулнӑ Соловйов ҫуртйӗр управленин ӗҫне йухӑнтарнӑ, пурӑнмали ҫуртсене капиталлӑ ремонт тумали ҫметӑсене пысӑк ҫитменлӗхсемпе тунӑ, вӗсене ҫаплипех ҫирӗплетнӗ; ҫуртйӗр управленин хальхи ҫӗнӗ начальникӗ Иванов йулташ та хӑй ӗҫлеме пуҫланӑ тапхӑр хушшинче ҫуртйӗр управленин тата ремонт кантурӗн аппаратне кӑтартнӑ ҫитменлӗхсене кӗске вӑхӑт хушшинчех пӗтерес ӗҫе мобилизацилемен, ҫавна пула дефектлӑ ҫметӑсене халӗ те тепӗр хут пӑхса тухман тата ҫуртсене 60 пин тенкӗлӗх капиталлӑ ремонт тумали ҫметӑна та туса хатӗрлемен.

Канаш хулинче ҫуртсене йусас выранне ҫӗнӗрен ҫуртсем тӑваҫҫӗ, Ҫӗрпӳ хулинче вара хватерсене сӑрлаҫҫӗ, оклейкӑ тӑваҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах вӑраха йамала мар йусав ӗҫӗсем ҫаплипех тӑрса йулаҫҫӗ.

Хуласенчи финанс пайӗсем тата Госбанк пурӑнман ҫуртсемшӗн тӳлекен арендӑ укҫинчен 95 процентне Коммуналлӑ банк счочӗ ҫине куҫарма палӑртса хунӑ срукесене пӑсаҫҫӗ, ҫакӑ вӑл йусав ӗҫӗсене туса пыма чарса тӑрать. Шупашкар хулин финанс пайӗ кӑҫалхи октябрӗн 1-мӗш тӗлне Коммуналлӑ банк счочӗ ҫине 43 пин тенкӗ кусарман ку укҫасене вӑл пӗтӗмӗшлӗ бйуджет шутне кӗртсе йанӑ.

Коммуналлӑ банк уйрӑм ҫынсен ҫурчӗсене йусама Улатӑр хулине панӑ 50 пин тенкӗ тата Шупашкар хулине панӑ 25 пин тенкӗ кивҫен укҫасемпе усӑ курасси питӗ те вӑрахӑн пырать. Госбанкӑн Улатӑрти уйрӑмӗ кивҫен панӑ укҫасене оформлени тӑвассине чарса тӑрать.

Хула совечӗсем ку тарана ҫитечченех хулара пурӑнакан ӗҫҫынниссене хутмали вутӑ тӑратас ыйтусемпе ӗҫлемен.

Чӑваш АССР Комуналлӑ хуҫалӑх Халӑх Комиссариачӗ пурӑнмали ҫуртсене вӑхӑтра йусассишӗн тата вӗсене хӗллене хатӗрлесе ҫитерессишӗн ҫителӗклӗ кӗрешмен, ҫуртйӗр управленисен тата хулари коммуналлӑ пайсен ӗҫӗсене контроль туман, ҫак пысӑк ӗҫ хӑй тӗллӗн пулса пырасса шаннӑ.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫапла **йышӑнать:**

1. Хула совечӗсен председателӗсене, вӗсем ҫине уйрӑмӑн ответлӑх хурса, ҫаксене тума хушас:

а) 1938 ҫулти октябрӗн 20-мӗш тӗлне кӑмакасене, ҫурт тӑррисене, кантӑксене, тулти алӑксене йусаса пӗтермеле; ытти йусав ӗҫӗсене кӑҫалхи нойабрӗн 1-мӗш тӗлне туса ҫитермеле, ҫаксене тума ӗҫсен графикне туса, ӑна кашни кунах пурнӑҫа кӗртсе пымала тумала;

б) кӑҫалхи октябрӗн 15-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр хула совечӗсен йатарлӑса пленумсем туса ирттермеле, вӑл пленумсенче „Пурӑнмали ҫуртсене йусасси тата вӗсене хӗллене хатӗрлесси ҫинчен“ РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1938 ҫулти сентябрӗн 1-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленине пурнӑҫа мӗнле кӗртсе пыни ҫинчен хулари коммуналлӑ пай пуҫлӑхӗн, ҫуртйӗр управлени начальникӗсен тата ремонт кантурӗсемпе ҫуртсен управлайушчисен доклачӗсене итлемеле;

в) ҫуртйӗр управленисен тата ремонтпа строительствӑ кантурӗсен аппарачӗсене тӗрӗслене, чи лайӑх работниксемпе ҫирӗплетмеле;

г) вунӑ кун хушшинче пурӑнман ҫуртйӗр арендаторӗсен тата хватер йышӑнакансен мӗнпур счочӗсене тӗплӗн тӗрӗслесе тухмала, мӗнпур парӑмсене кӑҫалхи октябрӗн 25-мӗш тӗлне пӗтерме татӑклӑ мерӑсем йышӑнса, хватершӗн тӳлемели хакне тата парӑмсен хисепне тӗрӗс шута илсе тухмала.

2. Государствӑ, хуҫалӑх, кооперации организацисен тата предприйатисен руководителӗсене кӑҫалхи октябрӗн 20-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр ҫаксене тума хушас:

а) арендӑ тата хватер укҫи йенӗпе парӑмсене пӗтӗмӗшпех пӗтерсе, малашне нимӗнле парӑмсем те пулмала мар тумала. Хула совечӗсен председателӗсене кӑҫалхи октябрӗн 21-мӗшӗнче Халӑх Комиссарӗсен Советне ҫак решенине пурнӑҫа кӗртмен руководителсем ҫинчӗн пӗлтерме хушас;

б) пурӑнмали ҫуртсене пурне те йусаса пӗтерсе, вӗсене хӗллене йалтах хатӗрлесе ҫитермеле.

3. Шупашкар хула совечӗн председательне Калинкинӑ йулташа 5 кун хушшинче, Коммуналлӑ банкра укҫа-тенкӗ ӗҫне васкавлӑн йӗркелесе, Шупашкар хулинче пурӑнмали ҫуртсене йусама уйӑрнӑ 60 пин тенкӗ укҫапа усӑ курас плана пӑхса тухса ҫирӗплетме хушас.

4. Финанс Халӑх Комиссарне Ҫеменав йулташа тата Госбанкӑн Чӑваш кантурӗн управляйушчине Орепин йулташа кӑҫалхи октябрӗн 15-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр пурӑнмали ҫуртсене капиталлӑ ремонт тумали ӗҫсем валҫи пурӑнман ҫуртсенчен илекен укҫасенчен 95 процентне пӗтӗмпех куҫарма тата малала вӑл куҫарусене вӑхӑтра туса пыма хулари финанс пайӗсемпе Госбанк уйрӑмӗсене кӑтартусем пама хушас.

5. Улатӑр хула советне Пороҫенкӑв йулташа, Шупашкар хула советне Калинкинӑ йулташа тата Коммуналлӑ банка Таврин йулташа ӗҫҫыннисен уйрӑм харпӑрлӑхӗ шутланакан ҫурчӗсене йусама Коммуналлӑ банкран паракан 75 пин тенкӗ кивҫен укҫана вӑхӑтра парса тама хушас.

6. Суту-илӳ Халӑх Комиссариатне Никитин йулташа, Чӑвашсойуза Ларионав йулташа, Чӑвашторга Тагачин йулташа тата Чӑвашпромсойуза Йегорӑв йулташа суту-илӳ организацисем урлӑ ҫуртйӗр управленисене тата халӑха кантӑк, замазкӑ, клейонкӑ, войлӑк, алӑксем тата чӳречесем валҫи кирлӗ тимӗр йапаласем тата ҫуртсене хӗллене хатӗрлес ӗҫсене тунӑ чухне кирлӗ пулакан ытти йапаласем ҫителӗклӗ таран тупса пама хушас.

7. Хула совечӗсене вутӑ хатӗрлесе хума, ӑна кӳрсе килме тата халӑха кирлӗ таранах парса тӑма вутӑ запасӗ тума хушас.

8. Чӑваш АССР Коммуналлӑ хуҫалӑх Халӑх Комиссарне Йерышӗв йулташа пурӑнмали ҫуртсене кӑтартса панӑ срукесенче йусас тата вӗсене хӗллене хатӗрлес ӗҫсем мӗнле пынине, ҫавӑн пекех тата вӑл ӗҫсене тума панӑ укҫа-тенкӗне тӗрӗс расхутланине ҫирӗп контроль тума хушас, мӗнпур палӑртнӑ ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтермеле пултӑр.

Йерышӗв йулташа ҫак постановленине пурнӑҫа мӗнле кӗртни ҫинчен кӑҫалхи нойабрӗн 1-мӗшӗнче Халӑх Комиссарӗсен Советне пӗлтерме хушас.

9. Шупашкар хула совечӗн президиумне Шупашкар хула совечӗн ҫуртйӗр управленин начальникӗ пулнӑ Соловйова, пурӑнмали ҫуртсене йусассине тата ҫуртйӗр управленин ӗҫне йухӑнтарнӑшӑн, ответ тыттарасси ҫинчен сӳтсе йавма хушас.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗн заместителӗ—А. СОМАВ.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн ӗҫӗсене пӑхаканӗшӗн—В. ЛЕБЕДӖВ.

Парти пурнӑҫӗ

ПСК(б) Парти историйӗн Кӗске курсне вӗренме хатӗрленеҫҫӗ

ИШЛЕЙ. „Правда“ хаҫатра пичетленсе тухнӑ Пӗтӗм Сойузри Коммуниссен (большевикла) Парти историйӗн Кӗске курсне Ишлей районӗнчи мӗнпур большевиксем—партире тӑракансемпе партире тӑманнисем те тулли кӑмӑлпа кӗтсе илчӗҫ.

ПСК(б) Парти историне тарӑнӑн вӗренме хатӗрленес ӗҫе Ишлей районӗнче, „Правда“ хаҫатӑн сентябрӗн 17-мӗшӗнчи умстатйи тӑрӑх тытӑннӑ.

„ПСК(б)П историне тарӑнӑн вӗренесси кӗске курс уйрӑм кӗнеке пулса тухнӑ хыҫҫӑн пуҫланать. Ун чухне вара партилӗ вӗренӳ кружокӗсен чӑннипех ӗҫлеме пуҫламала, хальхи вӑхӑтра пропагандиссем хатӗрлес пулать тата коммуниссене кӗске курспа малтанлӑха паллаштарас пулать“—тесе ҫырать „Правда“ хаҫат.

Ишлей районӗнче чи малтанах пропагандиссем хатӗрлеме тытӑннӑ. Коммуниссене вӗрентес тӗлӗшпе партин районри активӗнчен 8 пропагандис уйӑрса хунӑ, вӗсенчен райком секретарӗсем 3, райком инструкторӗсем 2, штатнӑй пропагандиссем 1, райкомӑн членӗ 1 тата парткабинет пуҫлӑхӗ 1. Вӗсене пурне те уйрӑм кружоксем ҫумне ҫирӗплетнӗ. Вӗсем районри пур коммуниссене те вӗренӳве йавӑҫтараҫҫӗ. Кунта ҫирӗплетнӗ пропагандиссем пурте 4 ҫул, 7 ҫул пропагандис пулса ӗҫленӗ ҫынсем.

Комсомолӗцсене вӗрентме 59 пропагандис уйӑрнӑ, вӗсенчен нумайӗшӗ коммуниссем.

Учителсене вӗренӗве йавӑҫтарас тӗлӗшпе 9 пропагандист уйӑрнӑ. Вӗсем образовани тӗлӗшӗнчен аслӑ шкул пӗтернисем, тата 3—4 ҫул пропагандист пулса ӗҫленӗ ҫынсем.

Халӗ кунта пропагандиссемпе час-часах ҫеминарсем туса ирттереҫҫӗ, ҫеминара парти райкомӗн пӗррӗмӗш ҫекретарӗ Тепейӗв йулташпа парткабинет пуҫлӑхӗ Долгов йулташсем йертсе пыраҫҫӗ.

Кусемсӗр пуҫне ПСК(б)П историне вӗренесси ҫинчен парти райкомӗ хыйӗн ларӑвӗнче, парторгсен, пӗччен коммуниссен канашлӑвӗнче тата пур пуҫламӗш организацисенче те сӳтсе-йавнӑ.

Кружоксенче илемлӗ литературӑсемпе усӑ курма парткабинетра кашни темӑпа уйрӑм списӑксем тунӑ, вӑл списӑксене пропагандиссене валеҫетпӗр. Сӑмахран, пӗррӗмӗш сыпӑка вӗреннӗ чух ҫакӑн пек илемлӗ литература кӗнекисемпе усӑ курма палӑртнӑ: М. Горькин—„Песня о соколе“, „Песня о буревестнике“, „Страсти-мордасти“, Некрасӑвӑн—„Кому на Руси жить хорошо“, „Железная дорога“, Успенскин—„Власть земли“ тата ытти писательсен произведенийӗсемпе те усӑ курма палӑртнӑ.

Пропагандиссене куллен тӗплӗн пулӑшса пыма парткабинет ҫумӗнче консультаци организацилӗнӗ. Халь кашни кунах консультацине 2—3 пропагандист пырса кайать. Консультацине пыракансене парткабинет пуҫлӑхӗ Долгов йулташ мӗнле ӗҫлемели ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарса парать.

Гер. Иванов.

Политинформаци ирттереҫҫӗ

Чӑвашсен йалхуҫалӑх рабфакӗнче кашни кунах уроксем пуҫланиччен 15 минут хушши политинформаци туса ирттереҫҫӗ.

Йулашки вӑхӑтра „Родина“ самолетӑн вӗҫевӗ ҫинчен каласа панӑ. Студентсем уйрӑмӑнах Йевропӑри лару-тӑру ҫинчен, Китайри вӑрҫӑ ҫинчен интереслӗнсе итлеҫҫӗ.

Ан. Иванов.

Курсантсем—пропагандиссем

Парти вӗренӳ кружокӗсене йертсе пыма пропагандиссен шкулӗнчен 11 курсанта уйӑрнӑ. Ку хисеплӗ ӗҫе курсантсем пысӑк хаваслӑхпа йышӑнчӗҫ. Хальхи вӑхӑтра вӗсем ПСК(б)П историн Кӗске курсне тӗплӗн вӗренеҫҫӗ. Парти Шупашкар хула комитечӗ курсантсене пурне те кружоксем ҫумне ҫирӗплетнӗ.

Ильмент.

Халӑх перепиҫне ирттерме большевикла хатӗрленмеле

1939 ҫулти йанвар уйӑхӗнче пулакан Пӗтӗм Сойузри халӑх перепиҫӗ государствӑн пит те паха ӗҫӗ пулса тӑрать.

Пирӗн ҫӗршыв пӗтӗм историре паллӑ, пысӑкран та пысӑк ҫӗнтерӳсем турӗ. Сталинла икӗ пилӗкҫуллӑхсем хушшинче пирӗн ҫӗршыв економикӑ тӗлӗшӗнчен ҫеҫ мар, класлӑ структурӑ тӗлӗшӗнчен те тӗпренех улшӑнчӗ.

Пӗтӗм Сойузри халӑх перепиҫӗ социалисӑмлӑ ҫӗршывра совет халӑхӗн йышӗ халиччен курман хӑвӑртлӑхсемпе мӗнле ӳссе пынине, ӗҫҫыннисен профессийӗсем тата вӗренӗвӗ тӗлӗшӗсенчен мӗнле пысӑк улшӑнусем пулнине пӗтӗм тӗнчене кӑтартса парӗ.

Перепиҫ итогӗсем сталинла виҫҫӗмӗш пилӗкҫуллӑхра хуҫалӑхпа культура строительствинче пит те кирлӗ материалсем пулса тӑрӗҫ.

Халӑхӑн ылханлӑ тӑшманӗсем, фашиссене сутӑннӑ троцкисла-бухаринла ирсӗрсем, халӑх-хуҫалӑх учот органӗсенче те сахал мар сӑтӑр тунӑскерсем, халӑх перепиҫӗ мӗнле пысӑк выран йышӑнса тӑнине вӗсем аван пӗлнӗ. Ҫавӑнпа вӗсем 1937 ҫулти Пӗтӗм Сойузри халӑх перепиҫне аркатнӑ. Тӑшмансем чӑнлӑха пӑсма тӑрӑшнӑ, халӑх йышне йурийех пӗчӗклетсе кӑтартасшӑн пулнӑ. Ҫак бандитсем хӑйсен ӗмӗчӗсене пурнӑҫа кӗртес майпа статистикӑ ӑсталӑхӗн елементарлӑ йӗркисене, ҫавӑн пекех тата правительствӑ йышӑннӑ инструкцисене йурийех пӑснӑ. Правительствӑ 1937 ҫулти перепиҫ организацилениие—ҫителӗксӗр, перепиҫ материалӗсене—йурӑхсӑр, тесе йышӑнчӗ.

Партипе совет организацийӗсен, чи малтан халӑх-хуҫалӑх учот органӗсен задачи вӑл—пулас перепиҫе статистикӑ ӑсталӑхӗн тӗп йӗркисемпе, Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн йышӑнӑвӗсемпе тата правительствӑ ҫирӗплетнӗ инструкцисемпе килӗшӳлӗ ирттересси пулать.

Ҫитес перепиҫӗн ӑнӑҫлӑхне, йаланхи пекех, ҫынсем, кадрсем татса параҫҫӗ. Совет Сойузӗнче пулас перепиҫре 500 пин ҫын ӗҫлемеле пулать. Перепиҫ работникӗсем Чӑваш республикӗнче кӑна 3 пин ытла ҫын пулаҫҫӗ.

Ҫак перепиҫ ӑнӑҫлӑхне татса паракан перепиҫ кадрӗсене вӑхӑтра тупса палӑртса, вӗсене вӗрентсе хатӗрлемеле.

ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ перепиҫ кадрӗсене суйласа илсе, вӗрентсе хатӗрлес тӗлӗшпе ҫирӗп срукесем палӑртнӑ.

Чӑваш республикӗнче перепиҫре йертсе пыракан тата массӑлӑ кадрсене суйласа илсе ҫирӗплетес ӗҫе пӗтӗмӗшпе илсен, туса пӗтернӗ ӗнтӗ. Халӑх-хуҫалӑх учочӗн районсенчи тата хуласенчи инспекторсен перепиҫ йенӗпе ӗҫлекен заместителӗсене, перепиҫ пайӗсен пуҫлӑхӗсене правительствӑ кӑтартнӑ срукра—сентябрӗн 15-мӗш тӗлне ҫирӗплетнӗ. Перепиҫ пайӗн пуҫлӑхӗсен помошникӗсене, инструктор-контролорсемпе счотчиксене те, хӑшпӗр районсенче перепиҫ работникӗсене запаслӑх уйӑрса ҫитерменнисӗр пуҫне, республикӑра пур ҫӗрте те правительствӑ кӑтартнӑ срукра—октябрӗн 1-мӗш тӗлне ҫирӗплетнӗ.

Ҫапах та перепиҫ кадрӗсене тупса ҫирӗплетес ӗҫӗн пысӑк ответлӑхне районри организацисем пур ҫӗрте те тивӗҫлипе туйса илмен-ха.

Перепиҫ ирттерекен массӑлӑ кадрсене запаслӑх уйӑрас тӗлӗшпе виҫӗ район правительствӑ палӑртса панӑ срука пурнӑҫа кӗртеймен. Варнар районӗнче халӗ те перепиҫ ирттернӗ чухне кирлӗ запаслӑх уйӑрнӑ работниксем ҫитмеҫҫӗ: инструктор-контролор 1 ҫын, счотчиксем 14 ҫын ҫитмеҫҫӗ. Канаш районӗ тӑрӑх инструктор-контролорсем 6 ҫын, счотчиксем—15 ҫын, Трак районӗнче инструктор-контролорсем 6 ҫын ҫитмеҫҫӗ. Ҫак ӗҫ малашне те ҫаплипех йулма пултараймасть. Кадрсене суйласа тупас ӗҫе районри йертсе пыракан организацисен хӑйсен аллине илмеле.

ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ перепиҫ кадрӗсене кашнине уйрӑмӑн суйласа илме хушнӑ пулнӑ. Кашни счотчике, кашни инструктор-контролора уйрӑмӑн тӗрӗслесе ҫирӗплетмеле. Ҫакӑ вӑл перепиҫ кадрӗсем мӗнле пысӑк выранта тӑнине кӑтартать. Анчах ҫапах та правительствӑ панӑ ҫак ҫирӗп кӑтартӑва хисеплемен руководительсем тупӑнаҫҫӗ-ха. Ҫӗмӗрле районӗнче перепиҫ кадрӗсене малтан кашнине уйрӑмӑн тӗрӗслемесӗрех ҫирӗплетнӗ. Перепиҫ кадрӗсене суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен комиҫҫи те, райӗҫтӑвком та вӗсене хӑйсен ларӑвне чӗнмен. Райӗҫтӑвком перепиҫре ӗҫлеме уйӑрнӑ ҫынсене чӗнмесӗрех заочнӑ ҫирӗплетнӗ. Перепиҫ ирттерекен кадрсене суйласа илесси ҫине ҫавӑн пек ҫийелтен пӑхнине пула ӗнтӗ Парачкав, Ишлей, Шӑхасан, Кувакинӑ тата Улатӑр районӗсенче перепиҫре ӗҫлеме уйӑрнӑ массӑлӑ кадрсем хушшине политикӑ тӗлӗшӗнчен шанчӑксӑр ҫынсем кӗрсе кайнӑ.

Парти райкомӗсен тата райӗҫтӑвкомсен задачи—ҫирӗплетнӗ кадрсене пурне те тепӗр хут тӗрӗслесе тухасси пулать. Перепиҫ ирттерме уйӑрнӑ кадрсене политикӑ тата ӗҫе йурӑхли йенчен тӗплӗн пӑхмала. Перепиҫ ӗҫӗ тӗрӗсленӗ ҫынсен, Ленин—Сталин партийӗшӗн чунтан тӑрӑшакан тӑван ҫӗршывӑн ывӑлӗсен, партири тата партире тӑман большевиксен аллинче пулмала.

Перепиҫ ирттерме кадрсем суйласа илнипех ӗҫ пӗтмест-ха. Перепиҫ работникӗсен аслӑ ҫарне ӗҫе хатӗрлесе ҫитерес пулать. Халӗ пит те ответлӑ тапхӑр пуҫланчӗ—вӑл суйласа илнӗ кадрсене вӗрентесси.

РСФСР Халӑх-хуҫалӑх учот управленийӗ ҫирӗплетнӗ инструкци тӑрӑх, сентябрӗн 25-мӗшпе нойабрӗн 15-мӗшсенче Чӑваш АССР Халӑх-хуҫалӑх учот управленийӗн кӗске курссем урлӑ халӑх-хуҫалӑх учочӗн районри тата хулари инспекторӗсене, вӗсен помошникӗсене, перепиҫ пайӗн пуҫлӑхӗсене—халӑх-хуҫалӑх учочӗн участкисенчи инспекторӗсене, ҫавӑн пекех тата участкӑри инспекторсем пулмасӑр ӗҫлекен перепиҫ пайӗн пуҫлӑхӗсене вӗрентсе калармала. Халӑх хуҫалӑх учочӗн районри тата хулари инструкторсен пӗррӗмӗш ушкӑнне сентябрӗн 25-мӗшпе октябрӗн 2-мӗшсенче ҫак кӗске курс урлӑ вӗрентсе каларнӑ та ӗнтӗ. Ку курсра Турхан районӗнчи инструкторсемсӗр пуҫне пур районсенчен те пулнӑ.

Октябрӗн 6-мӗшӗнче участкӑри инспекторсен пӗррӗмӗш ушкӑнне вӗрентме тытӑннӑ. Курса килнӗ ҫынсем перепиҫӗн тӗллевӗсемпе задачисене тата перепиҫӗн техникине тӑрӑшса вӗренеҫҫӗ.

Перепиҫ ирттерес ӗҫре йертсе пыракан кадрсем пурте Шупашкарта вӗренеҫҫӗ. Ыттисене, перепиҫӗн массӑлӑ кадрӗсене—перепиҫ пайӗн пуҫлӑхӗн помошникӗсене, инструктор-контролорсене тата счотчиксене район центрӗсенче, халӑх-хуҫалӑх учочӗн районри инспекторсем ҫумӗнче вӗрентеҫҫӗ. Ку вӑл пит те ответлӑ ӗҫ. Партипе совет организацисен тата халӑх-хуҫалӑх учот органӗсен вӑл ӗҫ ҫине тимлӗн пӑхмала, пуҫарса пымала. Вӑл ӗҫе оперативлӑ йертсе пыни кирлӗ. Кадрсене вӗрентес ӗҫе правительствӑ кӑтартса панӑ ҫирӗп срукесенче туса ирттерес пулать.

Ҫитес перепиҫӗн ӑнӑҫлӑхӗ партипе совет организацийӗсем перепиҫ ҫинчен халӑха анлӑн ӑнлантарса панинчен килет.

Перепиҫ ыйтӑвӗ тавра массӑлӑ ӑнлантару ӗҫне тимлӗн сарни кирлӗ. Пирӗн аслӑ ҫӗршывӑн кашни гражданинӗ перепиҫе ӑнӑҫлӑн ирттерессишӗн ответлӑх туйтӑр. Перепиҫ ҫинчен ӑнлантарса парас ӗҫе суйлав вӑхӑтӗнче ӗҫленӗ агитаторсемпе пропагандиссене йышлӑн хутшӑнтарас пулать. Верховнӑй Советсен суйлавӗсенче агитаципе пропагандӑ ӗҫӗнче пухнӑ пуйан опытпа сарлакан усӑ курмала. Перепиҫӗн тӗллевӗсемпе задачисем ҫинчен халӑха тӗплӗн ӑнлантармала. Большевикла агитаторан клас тӑшманӗсен сийенлӗ ӗҫӗсене ҫийӗнчех тӑра шыва каларса пырас пулать. Халӑх тӑшманӗсем ҫитес перепиҫре те сӑтӑр кӳме хӑтланса пӑхӗҫ.

Ҫав вӑхӑтрах ҫакна палӑртса хӑварма кирлӗ: чылай районсенче массӑлӑ ӑнлантару ӗҫне халӗ те тивӗҫлипе кирлӗ пек йӗркелемен. Райкомсемпе райӗҫтӑвкомсем ҫак ӗҫе пуҫарман-ха, пропагандиссене, агитаторсене тата беседчиксене хатӗрлес, вӗсен ӗҫне тӗрӗс йӗркелес ӗҫе тытӑнман.

Перепиҫ ӗҫне пулӑшакан комиҫҫисем тӑвасси хӑшпӗр районсенче пачах ҫителӗксӗр пырать. ПСК(б) Парти райкомӗсен, райӗҫтӑвкомсен тата халӑх-хуҫалӑх учот органӗсен йенчен ҫак комиҫҫисене йертсе пыни ҫукпа пӗрех. Вӑл уйрӑмӑнах Тракпа Патӑрйел районӗсенче курӑнать. Унта ку тарана ҫитсе те перепиҫ ӗҫне пулӑшакан комиҫҫисем туса ҫитермен. Районри пичетпе, ҫтена хаҫачӗсемпе, радиопа, пропагандӑпа агитаци тумали тата ытти майсемпе ҫителӗклӗ таран усӑ курмаҫҫӗ.

Пӗтӗм Сойузри халӑх перепиҫне хатӗрленес ӗҫ тавра социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва организацилемен. Ку ӗҫе тахҫанах тытӑнмала пулнӑ. Социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва районсене, йалсоветсене, перепиҫ пайӗсене, инструкторсемпе счотчиксен участкисене пурне те хутшӑнтарас пулать.

Перепиҫ йӗркелемели ӗҫӗн пур йенӗсем ҫинчен те халех тӗплӗн шутласа, мӗн-мӗн тумалине лайӑх палӑртни кирлӗ. Перепиҫ пайӗсем, инструкторсен участкисем валҫи кирлӗ пӳлӗмсене халех тупса хурас пулать. Йалсоветри учота, хватере ҫыранмали кӗнекесене, ҫурт тата хватер номӗрӗсене халех йӗркелемеле. Вӗсем пурте ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхне татса параҫҫӗ.

Пӗтӗм Сойузри халӑх перепиҫне ӑнӑҫлӑн ирттерес ӗҫ парти, совет, профсойуз тата обществӑлӑ вайӗсене пысӑккӑн мобилизацилеме ыйтать. Перепиҫе хатӗрленмели вӑхӑт нумай йулмарӗ. Пӗтӗм Сойузри халӑх перепиҫне большевикла хатӗрленер.

Х. А. Капков.

Ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă тĕле

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Çурçĕр-Хĕвеланăç чиккинчи краснофлотец-отличник комсомолец А. М. Петров вахтăра тăрать.

(Сойузфото).

Машинăсем туса кăларакан промышленнăçра ĕçлекенсен канашлăвĕ

Октябĕрĕн 9-мĕшĕнче ПСК(б)П Мускав Комитетĕнче Мускаври тата Мускав облаçĕнчи машинăсем туса кăларакан промышленнăçра ĕçлекенсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Вăл канашлура пин çын ытла пулнă.

Канашлăва машинăсем туса кăларакан промышленнăçри рабочи-стахановецсем, предприятисен директăрĕсемпе аслă инженерĕсем, парти, профсойуз тата комсомол ĕçĕнче ĕçлекенсем пухăннă.

Канашлу машинăсем туса кăларакан промышленнăçăн 1938 çулти тăваттăмĕш кварталта тумали ĕçсем çинчен ыйту лартса сӳтсе-йавнă.

(ТАСС).

Оборонă ĕçĕ районра

Вольск районĕнчи (Саратов облаçĕ) ĕççыннисем çĕршывăн оборонă тĕревне вăйлатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса пыраççĕ.

Комсомолецсем ПСÇЛКС 20 çул тултарнă йатпа противогазсем тăхăнса пысăк поход туса иртернĕ. Вĕсем 26 сехет хушшинче Вольскран Саратова çити утса тухнă. Походра 48 çулхи килхуçи хĕрарăмĕ Сазонăвă йулташ пулнă. Вăл çĕршывăн çулăмлă патриочĕ, ПВХО тата ворошилăвла тĕл перекенсен значок нормисене панă.

Хулари аероклубра çамрăксем авиаци техникине вĕренеççĕ. Анохин, Лопастейский тата ытти комсомолецсем вĕçев шкулĕнчен лайăх вĕренсе тухнă хыççăн летчик-инструктăрсем пулса ĕçлеççĕ.

Çавăн пекех оборонă ĕçне йалсенче те лайăх йĕркеленĕ. „Победа“ совхозра 60 çын ГСО нормине панă, „Большевик“ колхозра 48 çын.

(ТАСС).

В. Р. Вильямс академик çурални 75 çул тултарнине паллă тăвасси çинчен

Василий Робертович Вильямс академик çурални 75 çул тултарнине паллă туса, ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ В. Р. Вильямс академик йачĕпе почвенно-агрономически музей организацилеме йышăннă. Çав почвенно-агрономически музей валли çурт тума кирлĕ тесе йышăннă, ăна 1939 çулта туса пĕтермеле.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн вăл йертсе пыракан почвенно-агрономически станцине В. Р. Вильямс академикăн йатне пама тата Тимирйазев йачĕпе тăракан Ялхуçалăх академинче Вильямс йачĕпе тата çĕнĕрен вунă стипенди тума йышăннă.

Кунсăр пуçне тата ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариатне 1939 çулта Калинински облаçĕнчи Новоторжски суйлав округĕнче В. Р. Вильямс академик йачĕпе вунă çул вĕренмели шкул тума хушнă.

(ТАСС).

Пĕр районра 21 колхоз-миллионер

Пĕлтĕр Темрюк районĕнче (Краснодар крайĕ) миллионер-колхозсем 16 пулнă. Халь—21.

Казаксен станицисем палламала мар улшăнса пыраççĕ.

Илйич йачĕпе тăракан ялхуçалăх ертелĕ пысăк клуб туса пĕтерет. Клуб çуртчĕ виçĕ хутлă, питĕ илемлĕ пулать. Клубра театр, театр залĕнче 1500 çын ларма пулать. Çавăн пекех клубра библиотекă, вуламалли пӳлĕм, радиоузел, кружоксем ĕçлемелли пӳлĕмсем пулаççĕ. Клуб патĕнче парк тăваççĕ, çав паркра ташламали площадкă пулать. Çавăн пек çĕнĕ клубсем тата 11 колхозра лартаççĕ.

(ТАСС).

Амăртура мала тухнă финанс çекцийĕ

ТРАК. Медикасси йалсоветĕн председателĕ Капитонăв й. йулашки вăхăтра пур çекцисен ĕçнĕ те лайăх йĕркелерĕ. Епĕр пайан финанс çекцийĕн ĕçĕпе паллаштарасшăн. Финанс çекцийĕ халĕ йалсоветĕнче чи лайăх ĕçлекен çекци пулса тăрать. Иртнĕ çулсенче ку çекцинче миçе çын пулни те, вĕсен ĕçĕ те паллă пулман. Тĕрĕссипе каласан, вăл çекци хут çинче анчах шутланнă.

Йалсоветĕнче финанс агенчĕ пулса Тимофейĕв йулташ ĕçлеме пуçланăранпа ĕç йалтах урăхланчĕ. Финанс çекци членне финанс ĕçĕпе чăн-чăнах интересленекенсем сырăнчĕç. Вĕсем финанс ĕçне йуратаççĕ, çекци умĕнче тăракан ĕççене йаланах пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Финанс çекцинче 22 çын шутланса тăрать. Çекци членĕсем йалсоветне пулăшас шутпа хăйсем çине тĕрлĕрен обйазательствăсем илнĕ. Йалсоветне кĕрекен йалсене участкăсене уйăрса, вăл участкăсем çумне çекци членĕсене çирĕплетнĕ. Çак хăйсене çирĕплетнĕ участкăсенче çекци членĕсем колхозниксене, йединоличниксене пухса тĕрлĕрен ыйтусене ăнлантарса параççĕ. Ăнлантару ĕçре пысăк пулăшу парать.

Пурсуйкасси йалĕнче ĕçлекен çекци членĕ Константин Петров йулташ 1938 çулхи укçа-тенкĕ планне 98 процент тултарнă. Вăл çак ĕçре халĕ те тăрăшса ĕçлет.

Петров йулташ пекех Шалчакассинчи финанс çекци членĕ Павлăв йулташ та хастарлăн ĕçлерĕ. Вăл Шалчакасси йалĕнче виççĕмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухас плана 168 процент тултарчĕ; çакăн пекех тата 3-мĕш кварталта зайом укçине те 120 процент пухнă. Çак паха ĕçе кура халĕ Павлăв йулташа финанс çекци руководителне суйланă.

Çекци членĕсем тăрăшса ĕçленипе йалсовечĕ виççĕмĕш квартал планне вăхăтра тултарса районра пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Йалсоветĕн виççĕмĕш кварталра 13640 тенкĕ укçа пуçтармала пулнă пулсан, октябĕрĕн пĕрремĕшĕнче 23200 тенкĕ пухнă. Вăл шутран зайом укçи 2000 тенкĕ пухмала пулнă, вĕçем 3900 тенкĕ пухнă.

Мĕнле майпа çакăн пек çитĕнӳ пулма пултарнă-ха? Ку ыйту çине пĕр ответ çеç пулма пултарать. Вăл социалисăмлă ăмăртупа массă хушшинче кулленех ăнлантару ĕçне туса пынипе пулчĕ.

Иккĕмĕш кварталра районра укçа-тенкĕ пухас ĕçре Тĕрер йалсовечĕ малта пычĕ. Медикасси йалсоветĕнче ĕçлекенсем: „епĕр, те çине тăрса ĕçлесен Тĕрерсенчен йулмастпăр“, терĕç. Тĕрер йалсовечĕпе социалисăмлă ăмăртăва тухрĕç. Кун хыççăн кулленех пĕрпĕрин ĕçне тĕрĕслесе пыма тытăнчĕç. Пĕтĕм вăйпа районра пĕрремĕш вырăна тухассишĕн кĕрешрĕç. Йалсовечĕ çумĕнче тухса тăракан „Финçекци“ йатлă стена хаçатĕнче те йаланах укçа-тенкĕ пухас ĕç çинчен çутатса пычĕç.

Кулленех массăпа ĕçлени чăнах та ĕçре пысăк çитĕнӳ тума пулăшрĕ. Кварталăн итогĕ: чăнах та Медикасси йалсовечĕ пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Тĕрер йалсовечĕ финанс планне 152 процент, Медикасси 170 процент тултарчĕ.

Йалсоветне финанс планне тултарма кооператив та пулăшать. Медикассинчи кооперативĕ хăйĕн кварталти таварçавăрнăш планне йаланах тултарса пырать. Продавец Дмитрийĕв йулташăн 3-мĕш кварталта 6 пин тенкĕлĕх тавар сутмала пулнă пулсан, вăл 8 пин тенкĕлĕх ытла тавар сутнă.

Халĕ Медикасси йалсовечĕ Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕ. Çав ăмăртура государствă умĕнчи пур парăмсене те вăхăтра парса татнипе пĕрлех финанс ĕçĕпе те мала тухас тĕлĕшпе ăмăртаççĕ.

Пур йалсоветсен те Медикасси йалсоветĕнчи финанс активĕ пек ĕçлесен питех те аванччĕ.

Дм. Йегорăв.

Турăсăрсен кружокĕ

Йетĕрнери вăтам шкулта турăсăрсен кружокĕ организациленĕ. Кружокра пурĕ 40 çынна йахăн. Кружок занятисем вăхăтра тата йĕркелĕ пулса иртеççĕ. Кружока йертсе пыракан Йермолайĕв учитель унта тĕн тата тĕн праçникĕсем ăçтан пуçланса кайни çинчен, социалисăм строительствинче тĕн мĕнле пысăк сийен туни çинчен тĕплĕн каласа ăнлантарать.

Епĕр, вĕренекенсем, турăсăрсен кружокĕнче хамăр ăнланнине килте атте-аннесене каласа паратпăр, вĕсене те хамăр пек турăсăрсем тăватпăр.

М. Светогорăв.

Малтанхи постановкă

Нумай пулмасть Шупашкарти йалхуçалăх рабфакĕнче драмкружок организацилерĕç. Кружокра 23 çын, ăна Смородинăв студент йертсе пырать.

Октябĕрĕн 5-мĕшĕнче драмкружок пĕрремĕш хут пуçласа Павлăвăн „Иалта“ йатлă пйессине вылйаса пачĕ. Спектакль курма студентсемсĕр пуçне колхоз председателĕсен курсĕнче вĕренекенсем те пычĕç.

Куракансем постановкăна ырларĕç, малашне татах та лайăхрах спектакльсем лартса пама ыйтрĕç.

Сигайĕв.

Макарон хапрăкне йусаса пĕтернĕ

Тĕпренех йусанă пирки йулашки вăхăтра ĕçлемесĕр тăнă хыççăн, октябĕрĕн 8-мĕшĕнче Шупашкарти макарон хапрăкĕ ĕçлеме пуçларĕ.

Хальхи вăхăтра хапрăк йалтах урăхланать, мĕнпур оборудованине сарнă, урайĕсене йусанă, стенасене штукатур çапса тунă, упаковкă тумалли сĕтелсем тата чылай çĕнĕ машинăсем кӳрсе лартнă. Складсене тата производствăлă цехсене дезинфекциленĕ тата ыт.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Осоавиахимăн Одессări аероклубĕнчи парашют ĕçĕн инструктăрĕсем арăмĕпе упăшки—шофĕр В. И. Йакушов тата государствă университетĕнчи студенткă Н. И. Бережнайа—парашютиссем самолет çинчен сикнине сăнаса тăраççĕ.

Б. Мунстер фото-ўкерчĕкĕ (Сойузфото).

Тĕрĕсленсе килнĕ заметкăсем тăрăх

„Колхоза çаратаççĕ“

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Профинтерн“ колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра Качайкин хăй ирĕкĕпе 20 пăт панулмине айаккинеле парса пĕтернĕ. Фермă пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Магуçкинă Ксенин пĕр ĕнене çапса вĕлернĕ. Магуçкин Антон колхоз укçипе икĕ хутчен Горькине кайса 7 тенкĕ те 63 пус парса 15 пăчăкă илсе килнĕ, вĕсене вăл колхозниксене 12-шер тенке сутнă. Канаш—Шупашкар чукунçул строительствинче колхозниксем ĕçленĕшĕн 1400 тенке йахăн укçана колхоз правлени илнĕ, анчах та çав укçана счетовод пулса ĕçленĕ Василий Краснов патраштарса пĕтернипе, колхозниксене паман.

Çакăн пек фактсем „Профинтерн“ колхозра татах пулнă, вĕсем çинчен колхозниксем пухура сӳтсе-йавнă, айăплисене суда пама йышăннă, анчах та колхозниксен йышăнăвĕсем протоколсыр [illegible] йулса пынă.

Çак заметкăна Хĕрлĕ Чутай районĕнчи милици тытăмĕ тĕрĕслесе тухнă. Ксени Магуçкина, Василий Краснова, Антон Магуçкина тата Качайкина айăп [illegible] уголовнăй ĕç пуçарнă.

„Оçипăвăн хулиганла ĕçĕ“

„Иетĕрне районĕнчи Мăн-Чураш йалсовет председателĕ Гурий Оçипăв майăн 25-мĕшĕнче ирсĕр ĕçсем тума тытăннă. Колхозниксем вĕллесене çĕнĕ утара турттарнине курсан, вĕсем патне чупса пынă та Михаил Филиппăва наганпа тĕлленĕ, А. Петрова йулташа пеме тăнă“—тесе пĕлтернĕччĕ пире „С“ йалкор.

Заметкăна тĕрĕслеме ЧАССР милици тытăмне йанăччĕ. Унта çапла пĕлтерчĕç:

— Заметкăра çырнисем тĕрĕс. Ĕçе тĕрĕслесе пĕтернĕ, айăплисене суд аллине панă.

„Хула совечĕ курать-ши?“

Тутаркас районĕнчи „Восток“ колхоз членĕ А. Калинин йулташ Шупашкарти нефтебазăна çул начар пирки лашапа пырса кĕме май çукки çинчен çырса пĕлтернĕччĕ.

Çак заметкăна Шупашкар хула совечĕ тĕрĕслесе тухнă.

Çула тӳрлетме нефтебазăн пуçлăхне хушнă. Халь çула йусама тытăннă та ĕнтĕ.

„Потребительсем ыйтнине пурнăçламасть“

Сентябĕрĕн 2-мĕшĕнче „Чăваш Коммунĕ“ хаçатра „Потребительсем ыйтнине пурнăçламасть“ йатлă А. Йазыков йулташ çырнă заметкă пичетленсе тухнăччĕ.

Çакăн тăрăх Чăвашсойуз тĕрĕсленĕ. Заметкăри фактсем тĕрĕс пулчĕç. Халь Йалмачча лавкинчи прикашчике—Никитина ĕçрен кăларнă.

Суд

Вăрă

Шупашкарти 1-мĕш номĕрлĕ типографинче ĕçленĕ К. Малков çынсен йапалисене вăрласа пурăннă.

Кăçалхи майăн 3-мĕшĕнче вăл наборнăй цех пуçлăхĕ пӳлĕмĕнчен Круглов йулташăн çĕнĕ пиншакне тата картусне вăрланă. Ийулĕн 4-мĕшĕнче вăл Чебоксарскайа урамĕнчи 40-мĕш номĕрлĕ çуртра пурăнакан А. Калинкинă йулташăн йапалисене вăрласа кайнă. Ийулĕн 4-мĕшĕнчех ăна арĕсленĕ, унăн ĕçне суда панă.

Çак кунсенче Шупашкар хулинчи халăх сучĕ Малкова пĕр çул хушши хупса усрамала йышăннă.

В. Петров.

Ответлă редактăр заместителĕ В. ЙАКĂВЛĔВ.

Куславкка районĕнчи
ТĔРЛЕМЕСРИ МЕЖРАЙОННĂЙ КОЛХОЗ ШКУЛНЕ
преподаватель-зоотехник
ТАТА
преподаватель-агроном
васкавлă кирлĕ.
Ĕç укçи уйăхне 500 тенкĕ тараң.
ДИРЕКЦИ.

Автомобил çинчи кивĕ паллăсене улăштарман
АВТОХУÇАЛĂХСЕН
вăл паллăсене 1938 çулти октябĕрĕн 25-мĕшчен улăштармалла, кивĕ номĕрсене, вăхăтлăх панă учот билечĕсене тата техническĕ паспăртсене госавтоинспекцине тăратмала.
ЧАССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Рабочисемпе Хресченсен Милици Управленин Госавтоинспекцийĕ.

ШУПАШКАРТИ
Ленин йачĕпе тăракан ертеле
строительствăра ĕçлеме платниксем, хĕрарăмсемпе арçынсем валли çийĕлтен тăхăнмали тумтирсем çĕлекен çĕвĕçсем
КИРЛĔ.
Адрĕс: г. Чебоксары, Красная площадь, магазин Промкоопторга, верхний этаж, ход со двора.
ПРАВЛЕНИ.
3—3

ТЕАТР

Чаршав уçăлчĕ

Октябĕрĕн 8-мĕшĕнче Чăвашсен Академилĕ театрĕ хăйĕн çĕнĕ çезонне пуçларĕ. Чăваш труппи Н. Вирта çырнă „Çĕр“ („Земля“) йатлă трагедине кăтартрĕ.

Вăл пйесăн содержанийĕ çакăн пек.

...1920 çулхи август. Çамрăк совет республикĕ çав тери йавăр вăхăта пурăнса иртерет. Çĕршывра чи кирлĕ йапаласем те çук: ни крассин, ни супăнь, ни тăхăнмали тавраш сем. Тапак пулса — вăл та çук. Хресченсем урама тухса ларнă та, вĕсем хушшинче кăмăлсăр каласу пулса пырать: таварсем çук, анчах продразверсткине илеççĕ. Коммунист Листрат, Царицын патĕнчи çапăçусенче пулнăскер, вĕсене пурнăç мĕншĕн кун пек çаврăнса тухни çинчен ăнлантарать, анчах ăна ĕненесшĕн мар мужиксем. Кулаксем пăлхав пуçласси не кура, Листрат йалтан отрйада тухса кайать, хăйĕн шăллĕ Альошкăна. Сторожĕв кулак патĕнче ĕçлесе пурăнаканскере, пĕрле пыма чĕнет, анчах лешĕ пымасть. Çав вăхăтрах контрреволюцилĕ вăйсем хăйсен пуçне çĕклеççĕ. Сторожĕв патне есерсен бандитла организацин представителĕсем пыраççĕ, вĕсем турă йачĕпе витĕнсе, хресченсене тĕрлĕ чейе сăмахсемпе илĕртсе Антонăв есерпа пĕрле пулма чĕнеççĕ. Пăлхав пуçланать. Йалта та, таврара та влаçа кулаксемпе есерсем сыварса илеççĕ. Коммунист Листратăн шăллĕ Альошка та, хăй ăнланайманнипе, кулаксемпе пĕрле кайат.

Анчах хресченсем Антонăвпа Сторожĕв хыççăн кайнипе мĕнешкел улталаннине часах ăнлана пуçлаççĕ. Совет влаçĕ панă çĕр кайала сторожĕвсене, пуца куçать. „Халăх çĕрĕ“ валли йулашки тырра шăлса тухаççĕ. Хресченсем тӳсме çук мăнкăл асап курма тапратаççĕ, антонăвецсем ним айăпсăр çынсене хĕнеççĕ, çака-çака вĕлереççĕ. Антонăв хресченсен хутне кĕнĕ пек курăнма тăрăшать, анчах хăй кулаксене тата ытларах пуймалли майсем туса парать. Хресченсем ним тума пĕлмесĕр пулса çитеççĕ. Çав вăхăтрах, хĕрлисем вăйлăн хĕстерсе килнĕ пирки, Антонăв хăрушла тискер авантюра туса хурать: мужиксене „хĕрлисем пирĕн çине килеççĕ, китайецсемпе латышсем килеççĕ, вĕсем çаратаççĕ те нерсе вĕлереççĕ... вилнисемпе суранланнисем купипе купаланса выртаççĕ, вăл купа пӳртрен те çӳлле“, тесе улталаса пĕтерет те, пĕтĕм халăха хăйĕнпе пĕрле илсе тухса кайать. Анчах çул çинче вĕсене çаратса, нимсĕр тăратса хăварать...

Икĕ хресчен, чухăн Андрей Андрейчăпа вăтам Фрол Петрович чăнлăха шыраса Ленин патне кайма шут тытаççĕ. Станцăра вĕсене коммунист Листрат, анчахрах партин X-мĕш сйесĕнчен таврăннăскер, пурнăç халех йусанасси çинчен, продразверстка вырăнне продналог туни çинчен каласа парать, анчах лешсем пурĕпĕрех тухса кайаççĕ. Хăйсен кунçулĕ пĕтсе килнине кура, кулакла-есерла бандитсем тискерленнĕçемĕн тискерленсе пыраççĕ. Андрей Андрейчăпа Фрол Петрович Мускавран, Ленинпа Калинин патĕнчен хресченсем ĕмĕр-ĕмĕр шыранă чăнлăха тупса килеççĕ. Анчах вĕсем йалйыннине Ленин сăмаххисем çинчен каласа пана-паман, сторожĕвсем сиксе тухса пухăва аркатма тытăнаççĕ. Ленин хăй алă пусса панă декретсене туртса илеççĕ... Халăх пăлханать, анчах нимех те тăваймасть-ха. Фрол Петрович тӳсме çук тăрăхса, Антонăв патне каласма тесе кайать. Çав вăхăтрах Листрат шăллĕ Альошка, хăй улталаннине кура, коммунистсен отрйадне хутшăнать.

Антонăв банди йулашки кунсене пурăнса иртерет. Вĕсем ĕнтĕ тахçанах етем сăн-сăпатне çухатнă. „Мĕн тăвапăр-ха ĕнтĕ, Александр Степанăвич?“—тесе ыйтать Антонăвран унăн пĕр çынни. „Ĕçес!“—тет Антонăв. Ерех кӳпсе тултарсан арĕсленĕ Фрол Петровичран мăшкăлама, ăна асаплантарма тытăнаççĕ, йулашкинчен персе вĕлереççĕ. Анчах та вĕсен ĕмĕрĕ иртнĕ ĕнтĕ. Вăхăт нумай та иртмест, пĕтĕм бандăран 3 çын—атаман пулнисем çеç йулнă. Вĕсем те саланаççĕ. Хирте пĕр Сторожĕв кăна йулать.

— Мĕн тăвас-ха манăн?—тет вăл хăй пĕччен. Иккĕмĕш уйăх çӳретĕп, анчах мĕн усси. Пӳрт çунтарса йаратăп—çĕнĕрен тăваççĕ. Пуйаса сырмана сиктеретĕп—ыран урăххисем килеççĕ. Часах хĕл пулать, сивĕ, вилĕм...

Сасартăк вăл ĕлĕк хăйĕн батракĕ пулнă Альошкăпа арăмĕ саванăçлăн кулса пынине курать, пытанать. Кусем кайсан хирти тырăсене хавaслă кăмăлпа пăхкаласа çӳрекен Андрей Андрейчăпа асăрхать, урнă кашкăр пек пулса кайса, ăна вĕлерме шут тытать. Анчах хăрамасть Андрей Андрейчă...

— Вĕлерес тетĕн-и? Вĕлер, хăрамастăп! Еп вилсен те, ман ывăл тăрĕ çак çĕр çине!—тет вăл татăклăн. Тăрас çук ес çак çĕр çинче. Пирĕн пулать вăл, ĕмĕрлĕхех!

Сторожĕв Андрей Андрейча вĕлереймест. Йешĕрекен хирте тискер кашкăр пуррине сиссе, ăна тытма пĕтĕм халăх ыткăнать. Часах ăна Альошка сĕтĕрсе тухать.

— Ну, сĕтĕрĕнсе çӳресе çитрĕ-и? Етем какайне çисе тăрантăн-и? тет вăл хăйĕн ĕлĕкхи хуçине.

Революцилĕ трибунал умĕнче ответ тытма пулса, Листрат револьвĕрне кăларать те, Сторожĕва илсе тухса кайать. Андрей Андрейчă халăха çапла калать:

— Акă пурнăç йепле çаврăнса килчĕ, мужиксем. Çак кашкăр король пуласшăнччĕ, пĕтĕм çĕре хăйĕн валли çаварса илесшĕнччĕ. Халь çĕрĕ те пирĕн, тата хамăршăн хамăр корольсем!

Хресченсем ĕçе тытăнаççĕ...

Кĕскен каласан, пйесă Совет влаçĕ вăрçăлă коммунисăмран мирлĕ строительствă патне куçнă тапхăра, партин X-мĕш сйесĕ умĕнхи тата унăн хыççăнхи вăхăта кăтартса парать. Пайанхи кунран илсен, вăл историлĕ пйесă пулса тăрать.

Академилĕ театрăн чăваш труппи ку пйесăпа икĕ уйăх ытла ĕçленĕ. Тӳрех калас пулать: ĕçлени сайа кайман, труппă (режиççорĕ Гр. Морĕв) самайах ĕнентерӳлĕ, пăхма интереслĕ, чылайлăха асра йулмалли спектакль тунă. Автăрăн тĕп шухăшне, пйесăн идейне театр куракансем патне аванах илсе çитерет. Пйесăри тĕп рольсене вылякансенчен пысăк пайĕ образсене çителĕклĕ туллин кăтартса параççĕ (партизансен отрайĕн командирĕ Листрат — арт. Ургалкин, унăн шăллĕ Альошкă—арт. Алексейĕв, вăтам хресчен Фрол Петрович—арт. Медиков, унăн хĕрĕ Наташă—арт. Ивановă, кулак Сторожĕв — арт. Фадейĕв, бандитсен пуçлăхĕ Антонăв—арт. Айзман, бандăсен штабĕн начальникĕ Сафирăв — арт. Виноградăв). Вĕсене пĕрне ырласа теприне хурлама май килмест, мĕншĕн тесен вăйăйин пахалăхĕ пĕр пекрех. Кунта ĕнтĕ режиссурă ансамбльшăн, пур акторсене те пĕр пек маçтăрлăхпа выляттарассишĕн тăрăшни паларать. Хăшпĕр рольсене вылякансен (Андрей Андрейчă—арт. Сперанский, Косова арт. Тимофейĕвă) „театральнăç“, „наигрыш“ ытлашширех, çавă образ паха лăхне, унăн хакне чылай чакарать. Анчах ку çитменлĕхе пĕтерме йавăр мар. Епизодлă рольсене вылякансем те асра йулаççĕ (матрос—Харитонăв, мелник — Тарасăв).

Спектакльри çитменлĕхсен шутне, чăн малтан, массăлă сценăсем йĕркесĕр иртнине кĕртес пулать. Массовкăсенчи мизансценăсене çирĕплетни палăрмасть,—çынсем сценă тăрăх ним йĕркесĕр çӳреççĕ. Анчах та массовкăсем спектакльре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ, режиссурăн çавна манмала мар мĕн, ытларах ĕçлемеле мĕн.

Декорацисем, пĕтĕмĕшпе, начар мар, анчах художник та, режиççор та—Антонăв банди çӳренĕ вырăнсенчи çуртйĕрсене тата унти пейзажсене пĕлсе çитейменни курăнать. Тамбов таврашĕнче сценă çинче кăтартнă йышши пӳртсем те, çавнашкал сырма-çатрасем те çук унта. Епĕр историлĕ чăнлăха кăтартса парас тетпĕр пулсан, художествăлă оформлени çине те тивĕçлĕн çаврăнса пăхас пулать.

Йулашкинчен — спектакльри музыкă çинчен. Ку тĕлĕшпе вара режиссурăпа нийепле те килĕшме çук. Спектакль „сормăвскойĕнчен“ пуçланать. Тата ку кĕвве пĕрре кăна мар, темиçе хутчен выляççĕ, вăл кĕвĕ пĕтĕм спектаклĕн лейтмотивĕ пекех пулса тăрать. Спектакле лартакансем çав ӳсĕр хулигансем çеç йурлакан, калама çук культурăсăр, тахçан пăнтăхнă, пур çĕртен хăваласа кăларнă кĕвĕсĕр пуçне урăх нимĕн те тупайман-ши вара? Вырăссен çав тери паха халăх йуррисем çук-ши? Ку вăл сценă урлă культурсăрлăха сарни çеç пулать. Урăх нимĕн те мар. Кунта „историлĕ чăнлăха паратпăр“ тенипе витĕнсе тăмалли çук, 1920—21 çулсенче пĕр çав йурă çеç пулман вĕт! Халех, халех улăштарас пулать ăна.

Çапла ĕнтĕ, çезон пуçламĕшĕнчи спектакльре аван йенсемпе пĕрлех çитменлĕхсем те чылай. Анчах вĕсене пĕтерме май пур. Пĕтересех пулать. Халĕ чаршав уçăлчĕ çеç-ха вĕт, малалла ĕçлемелли нумай.

ЛЕОНИД АГАКАВ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 532. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 798.ф. б. 58 × 84 п. л.